Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—49, Дежурнăйăн 6—23

[illegible]улччăр Рабочисемпе Хресченсен паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн УКАЗĔ

„XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медаль тăвасси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ XX çул тултарнине паллă туса:

1. „XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медаль тăвас.

2. „XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медалĕн Положенине, унăн ÿкерчĕкне тата медаль мĕнлине çырса кăтартнине çирĕплетес.

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти йанварĕн 24-мĕшĕ.

„XX лет Рабоче-Крестьянской Красной армии“ йатлă йубилейлă медаль çинчен кăларнă ПОЛОЖЕНИ

1. „XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медальпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар флочĕн кадрти командирĕсемпе начальникĕсен составĕнче тăракан çак çынсене наградăлаççĕ:

а) 1938 çулхи февралĕн 23-мĕш (Хĕрлĕ Çар кунĕ) тĕлне Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче тата Тинĕс-Çар флотĕнче 20 çул службăра тănисене, граждăн вăрçинче тата тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн тата вăл никама та пăхăнса тăрас марришĕн пынă вăрçăра тăван çĕршыв умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунă, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс Çар флочĕн кадăрĕсенче тăракан çынсене;

б) Граждăн вăрçин çулĕсенче çапăçура паттăр ĕçсем тунăшăн Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăланă çынсене.

2. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар флочĕн речĕсенче нумай вăхăт службăра тăнин шутне 1918—1921 çулсенче Совет влаçĕн тăшманĕсене хирĕç кĕрешнĕ Хĕрлĕ Çар отрйачĕсемпе дружинисенче тата Хĕрлĕ партизан отрйачĕсенче службăра пулнине кĕртеççĕ (I-мĕш статйари пункт).

3. „XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медальпе ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕ наградăлать.

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти йанварĕн 24-мĕшĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕ 1938 çулти йанварĕн 24-мĕшĕнче çирĕплетнĕ

„XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медаль мĕнлине çырса кăтартни

„XX лет Рабоче-Крестьянской Красной Армии“ йатлă йубилейлă медаль тĕрĕс çаврашка формилĕ, çаврашка диаметрĕ 3 сантиметр. Çаврашкан çийĕ—тĕксĕм шурă, çаврашка хĕррипе—йĕри-тавра 2 миллиметр сарлакĕш йалтăраса тăракан çутă кăшăл. Çаврашкан пичĕйĕнĕ çине емальрен тунă пилĕк вĕçлĕ Хĕрлĕ Çăлтăр кĕртсе лартнă. Хĕрлĕ Çăлтăр хĕррине кĕмĕлпе тыттарса çавăрăнă. Çаврашка айне, çăлтăран айалти пайăркисен хушшине, ылтăнпа „XX“ цифрăсем çырса хунă, цифрăсен çÿлĕшĕ 8 миллиметр, сарлакăшĕ 7 миллиметр. Цифрăсен айал вĕçĕ кăшăлăн çÿл йĕнчи хĕри çине тĕренсе тăрать.

Медальăн тÿнтер йенче—винтовкăран перекен красноармейцă кĕлеткки, красноармейцă кĕлеткин çÿлĕшĕ 25 миллиметр, вăл хĕллехи хурал формипе тумланнă, айалта красноармейцă кĕлеткинчен сылтăмарах датă „1918—1938“.

Медаль, вăчăра валльи тунă пĕчĕк çăртасем, ункă тата металлран тунă шурă пластинкă пулăшнипе, тÿрĕ кĕтеслĕ пластинкăпа пĕрлешсе тăрать, пластинкă пысăкăшĕ—15—25 миллиметр, ăна хĕрлĕ тĕслĕ лентăпа витнĕ.

Медальа тумтир çумне çирĕплетмешкĕн вăл пластинкăн тÿнтер йенче касса тунă винтăпа гайка пур.

Медальа оксидированнăй кĕмĕлтен, „XX“ цифрăсене ылтăнран туса хатĕрлеççĕ.

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссарĕ, Совет Союзĕн [illegible] ремович Ворошилов йулташ.

[С]оциалисăм çĕршывĕн хĕçпăшалла вайĕ

[illegible] Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕне [illegible] 20 çул тултарчĕç. [illegible] лисăм çĕршывĕнчи ну[illegible] лăхăн тăван çарĕ. Рабо[illegible] сен Хĕрлĕ çарĕпе Хĕрлĕ [illegible] совет халăхĕн уйа[illegible] çулăмĕсенче тунă [illegible] вăрçи [illegible] çул хушши ĕнтĕ рабочисем[illegible] ĕнчери пĕрремĕш социа[illegible] сăвине сыхласа тăрать.

[illegible] пирĕн социалисăмла тă[illegible] хăватла тĕрекне—Ленин—[illegible] тунă, вăл пăхса, вĕрент[illegible]

[illegible] ничен пирĕн мухтавлă [illegible] пулнă, ăна тăвас ĕçре пи[illegible] организацийĕсем питĕ пы[illegible]

Социалисăмла Аслă революци[illegible] кунĕсенчех çамрăк Совет [illegible] шалти контрреволюцине [illegible] питĕ пысăк задач тухса [illegible] пролетарилĕ центăрĕсен[illegible] патша генералĕсен [illegible] бандисем окраинăсене кусç[illegible] пуйан-кулак сийĕсем çи[illegible] тленнĕ. Вĕсене пролетари[illegible] государствине пĕтерсе хума [illegible] социалисăмла çĕршывсем ук[illegible] пăшал, тумтир парса пулăш[illegible] Совет влаçĕ умне регулярнăй [illegible] организацилес задачă тух[illegible]

[illegible] пролетариатăн аслă çулпуçĕ [illegible] Çара тăвас, ăна вĕрентсе çи[illegible] йаланах хăй активлăн хут[illegible] татăклă кăтартусем парса [illegible]

[illegible] çĕнтерĕвĕсене организаци[illegible] Ленинпа пĕрле Сталин йул[illegible] пысăк ĕçсем тунă. Граждăн [illegible] Сталин йулташ чи ответ[illegible] хăй йертсе пынă. Аçта [illegible] пысăк вăй, революцилĕ [illegible] большевикла руководствă ыйт[illegible] йаланах Сталин йулташа [illegible] Çарăн хăватне çирĕплетес, [illegible] тăван çĕршывăн тăшманĕ[illegible] çĕмĕрес çĕрте тата Ленинпа [illegible] чăклă соратникĕ, вĕренеке[illegible] Ворошилов йулташ пулнă.

[illegible] Сталин йертсе пынипе Хĕрлĕ [illegible] вăрçи хайаррăн пынă çул[illegible] паланчăк отрйадсенчен полк[illegible] сене, дивизисене, çарсене [illegible] дисциплинăпа пĕрлешсе [illegible] хĕçпăшалла вăй пулса тăчĕ.

[illegible] çапăçусенче Хĕрлĕ Çар тăван [illegible] империалисăмла державăсем [illegible] сыхласа тăчĕ, хамăр çĕр[illegible] çĕршыв пусмăрĕпе империали[illegible] государствăсен чуралăхĕнчен хă[illegible] çĕршывсене пăхăнса тăман го[illegible] тума пулăшрĕ, совет халăхĕн [illegible] хăварчĕ.

[illegible] Çар паттăр, ун пек вăйлă çар [illegible] çук. Вăл хăйĕн малтанхи [illegible] Германи империалисăмĕн [illegible] пама пултарчĕ. Хĕрлĕ Çар [illegible] Царицын [illegible] çапăçу[illegible] Франци, Йапони [illegible] 14 [illegible] ыватрĕ. Перекопа[illegible] Царицын [illegible] [illegible]

[illegible] нихăçан та манмĕç. Çав çапăçусенче ĕнтĕ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тĕреклленчĕ, хăватланчĕ. Çав чаплă шкул витĕр тухса вăл пиçĕхрĕ, çитĕнчĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс—Çар флотĕнчи руководителсем, командирсем, красноармеецсемпе краснофлотцăсем—рабочисемпе хресченсен ывăлĕсем, Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешекен паттăрсем. Пур пирĕн мĕне сыхламали, пур пирĕн мĕнпе сыхламали, пур пирĕн камсемпе сыхламали.

Пирĕн çĕршыв—вăйлăран та вăйлă индустрилĕ çĕршыв—хăйĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флотне мĕн кирлине пурне те кирлĕ таран, тĕнчере пĕрремĕш класлă чи вăйлă çар техники парса, Хĕрлĕ Çара никам çĕнтерейми, никам аркатайми, туса хучĕ.

Совет Сойузĕн социалисăмла шултăра промышленноçĕ хулара та, йалта та социалисăмла хуçалăха çĕнĕ техникăпа пуйанлатнипе пĕрлех, пирĕн тăван çĕршывăн оборонă хăватне ÿстерме кирлĕ çар техникине ытлăн-çитлĕн кăларма тытăнчĕ. Вăл техникăпа епĕр мухтанатпăр. Вăл пирĕн çарăн капăрлăхĕ. Пирĕн самолётсем—пуринчен инçерех, хытăрах, çÿлерех вĕçеççĕ. Пирĕн çĕршывăн хĕçпăшалла вăйĕсем тинĕсре те, çĕр çинче те, сывлăшра та—пур çĕрте те тăшмансене аркатма пултарĕç.

Çар техникине тата вăйлăрах, тата чаплăрах тăвас тесе большевиксен партийĕпе совет правителстви çине тăрсах ĕçлеççĕ. Пирĕн аслă социалисăмла çĕршывăн хăйне тивĕçлĕ пысăк вăйлă Тинĕс-Çар флочĕ пулмала, тесе хăварчĕ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Çессийĕ. Вăл ку тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем йышăнчĕ—Совет правителстви Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссариатне тума йышăннă решенийе çирĕплетрĕ.

Пирĕн политикă—мирлĕ саманашăн кĕрешесси. Çак мирлĕх политикăн, ССР Сойузĕнчи халăхсен мирлĕ ĕçĕн чи пысăк никĕсĕ—Хĕрлĕ Çар пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн çирĕплĕхне пула, унăн тĕреклĕ те аслă вăйне пула пирĕн çĕршыв 16 çул хушши лăпкă саманапа пурăнать. Анчах епĕр пирĕн çĕршывăн йĕри-тавралăхĕнче капиталисăмла государствăсем тăнине пĕр самантлăха та манма пултараймастпăр. Çавăнпа та пирĕн хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине татах та татах вăйлатса, çирĕплетсе пымала. Ку пирĕн—чаплăран та чаплă, мухтавлă задач.

„Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх“ та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала“... (Сталин).

Ĕçхалăхĕн тискер тăшманĕсем—фашиссем, вĕсен агенчĕсем—троцкисла-бухаринла çĕлен-калтасем пирĕн çĕршыв çине тапăнма тăрăшаççĕ. Анчах вăрçă [illegible] йаракансем Совет Сойузĕ çине тапăнма хăйсан, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флот тăшман çине хăйсен техникин пĕтĕм вăйне, хăйсен организацин пĕтĕм хăватне [illegible]

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ XX çул тултарнине паллă тунă йатпа амнисти парасси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ XX çул тултарнине паллă туса, пур çар служăшчисене те, вĕсене пĕрремĕш хут судпа виçĕ çул срукláха ирĕксĕр хăвармала туса айăпланă пулсан, вĕсене, государствăна хирĕç преступленилĕ ĕçсем тунăшăн судпа айăпланнисемсĕр пуçне, хупса усрас çĕртен тата приговорпа çыхăннă ытти наказанисенчен ирĕке кăларас, çавăн пекех тата условнă суд туса айăпланă çар служăшчисене çав айăпран хăтарас.

Çак амнистийе çавăн пекех тата Çар служăшчисене, вĕсен ĕçĕпе следстви пырать тата вĕсен айăпĕ тăрăх виçĕ çултан ытла ирĕксĕр хăвармала мар пулсан, памала тăвас.

ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Председателĕ—М. КАЛИНИН.
ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн Секретарĕ—А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти йанварĕн 24-мĕш.

Столицăри районсенчи чаплă пленумсем

Февралĕн 21-мĕшĕнче каçхине столицă районĕсенче районри Советсен, ПСК(б)П райкомсен тата ПСÇЛКС райкомсен фабрикăсемпе заводсенчи рабочи-стахановцăсемпе, ударниксемпе пĕрле пухăннă чаплă пленумĕсем пулса иртнĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине столицăри ĕççыннисем калама çук пысăк хавхаланупа паллă тăваççĕ, социалисăм çĕршывĕн мухтавлă сыхлавçисене саламлаççĕ.

Сталинский районри чаплă пленумра 1.300 çынна йахăн пулнă, вĕсем хушшинче Хĕрлĕ çар бойецĕсемпе командирсем пулнă. Оборонă активĕн йачĕпе пленума Сталинский районри летчиксем, парашÿтиссем, Ворошиловла тĕл перекенсем, ПВХО тата ГСО значкисĕсем, автомотоклубсен членĕсем саламланă. Тухса калаçнисен шутĕнче хаклă тирсен 4-мĕш фабриксенчи работница Натă Трапаревскайа — летчицă, шиксĕр парашÿтиска пулнă. Трапаревскайа йулташ парашÿтпа 70 хут сикнĕ, 300 парашÿтис вĕрентсе кăларнă.

Свердловский районри организацисен чаплă пленум пулса иртнĕ Сойузсен Çурчĕн Колоннăллă залне 1.500 çын ытла пухăннă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ XX çул тултарни çинчен Комкор Соколов йулташ доклад тунă. Мускаври пролетарилĕ стрелковой дивизин бойецĕ Карлов йулташ хăйĕн чаплă пленума саламласа каланă сăмахĕнче çапла каланă:

— Епĕр вăрçăшăн мар, анчах çапăçува тăма йаланах хатĕр. Социалисăмла тăван çĕршывăн таса чиккисем çине тапăнма хăйакан шăн хуйхă пулĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар флочĕ пĕтĕм халăхпа пĕрле тăрса тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинчех çĕмĕрсе тăкса тĕп тăвĕç...

Столицăн Пролетарский, Ленинградский т. ытти районсенче те чаплă пленумсем çавăн пекех пысăк çĕкленÿпе пулса иртнĕ. Пленумсенче пулнисем Сталин тата Ворошилов йулташсем патне саламсем йанă.

(ТАСС).

Çĕрĕç органĕсенчи йертсе пыракан работниксен Пĕтĕм Сойузри канашлувĕ хупăннă

Канашлура В. М. Молотов й-ш сăмах туса каланă

Февралĕн 21-мĕшĕнче çĕрĕç органĕсенчи йертсе пыракан работниксен Пĕтĕм Сойузри канашлувĕ хăйĕн ĕçĕсене туса пĕтернĕ. Канашлу 4 кун хушши пынă.

Канашлун февралĕн 21-мĕшĕнче пулнă ларувĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ В. М. Молотов йулташ хутшăнса ĕçленĕ.

Пренисем, нумай республикăсемпе облăçсенче çĕрĕç органĕсем ака ĕçне ăнăçлăн иртерме кирлĕ условисем туса çитерессинчен инçетре тăнине кăтартса панă. Çав вăхăтрах канашлура çакна пит те уççăн палартнă: ĕçе большевикла йĕркелесе йарсан çав республикăсемпе облăçсен çуракине хатĕрлесе [illegible] йах иртерме кирлĕ майсем пурте çителĕклĕ. Çуракине ăнăçлăн хатĕрленнĕ примера Кабардино-Балкари АСС Республикĕ кăтартса панă. Унта тракторсене йанварĕн 25-мĕшнех йусаса пĕтернĕ, колхозсен вăрлăхсем çителĕклĕ, колхозсем хушшинчи вăрлăх улăштарас ĕçе туса пĕтернĕ.

Йулашки лару вĕçĕнче В. М. Молотов йулташ сăмах туса каланă. Вăл хăй сăмахĕнче социалисăмлă йалхуçалăхĕн 1938 çулти задачисем çинчен каланă. Молотов йулташ трибунă çине тухсан, ăна тăвăллă овации туса саламланă.

(ТАСС).

Чăваш çĕршывĕ вăл кунсенче

Çамрăк Совет республикинчи рабочи класпа ĕççынни хресченсем 1918 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен регулярлă Хĕрлĕ Çарне организацилесси çинчен каларнă ленинла декрета пысăк çĕкленÿпе те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем коммуниссен партийĕ йертсе пынипе çийĕнчех çав çара тума тытăнчĕç.

Хĕрлĕ Çар, интернационаллă çар пулса, ĕлĕк патша Российĕнче хĕнхур курса пурăннă халăхсем хушшинче пысăк пулăшу тупрĕ. Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем Хĕрлĕ Çар çине хăйсене ĕмĕрхи експлоатацирен тата вырăс буржуази пусмăрĕ айĕнчен чăнпипех те çăлса ирĕке кăларакани çине пăхнă пек пăхрĕç.

Ĕлĕк хĕнхур курса пурăннă нацисен ĕççыннисемпе пĕрле Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне тăвас тата ăна çирĕплетес ĕçре Чăваш çĕршывĕнчи ĕççыннисем те активлăн хутшăнса ĕçлерĕç. Чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕсем партипе правителствă чĕнсе каланине ответлесе, хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăма пулчĕç. Вĕсем, пур нацисен ĕççыннисемпе тăванла союз туса, Хĕрлĕ Çара çирĕплетес тĕлĕшпе активлăн ĕçлерĕç, халĕ те çаплах тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем Сиваш çеçен хирĕсенче, Белоруççин шывлă-лачакалă çĕрĕсенче, Çĕпĕрти сивĕ вăрмансенче, Урал тăвĕсенче пуçĕсене хучĕç.

1918 çулхи çуркунне чăваш йалĕсем тăрăх Хĕрлĕ Çар ретне ирĕклĕн кайма сыраççĕ тенĕ хыпар сарăлсан, йалсемпе вулăссенчен ĕççынни хресченсем, уйрăмах ытла çамрăксемпе комсомолецсем, ушкăнпала тата пĕчченшерĕн ĕлĕк уйес центрĕсем пулнă çĕреле пухăнса пыма пуçларĕç. 1918 çулхи çулла Чехословаки бандисемпе кĕрешме пĕр Шупашкар уйесĕнчи йалсемпе вулăссенчен кăна 260 çын сырăннă.

Есерсемпе буржуалă националиссем контрреволюцилĕ çĕрĕк „теорисем" сарчĕç. Вĕсем: чăвашсен революцийĕ Чăваш çĕршывĕнче кăна сыхламала, тесе лăпăртатрĕç. Вĕсем граждăн вăрçи фронтне добровольцсем йарассине тата Чăваш çĕршывĕнчен продоволствисем йарассине хирĕç уççăнах тăчĕç.

Парти организацисем есерсемпе буржуалă националиссен çĕрĕк „теорине" çапса çĕмĕрсе, Хĕрлĕ çара продоволствисем тăратас ĕçе лайăхлатрĕç. Чехословаксен пăлхавне путарса лартас çĕрте çапăçнă Хĕрлĕ Çар чаçĕсем чăваш халăхĕнчен пулăшу ытти вăхăт лайăхлатнă, вырăнти парти организацисем темиçе кун хушшинче вĕсене валĕçи кирлĕ продуктăсене хатĕрлесе вĕсем патне ăсатрĕç. Ытла туллийех мар сведенисем тăрăх, пĕр Шупашкар уйесĕнчен кăна фронта 7.299 пăт ыраш, 2.771 пăт сĕлĕ, 6.188 пăт çĕрулми, 29.702 штук çăмарта тата ытти продуктăсем ăсатнă. Чухăнсем чухăнсен комитечĕсене пĕрлешсе тата хăйсем йенне вăтам хресченсене йавăçтарса, парти организацисем йертсе пынипе çамрăк Совет республикине çирĕплетес тата Хĕрлĕ Çара çирĕплетес тĕлĕшпе чылай чаплă страницăсем сырса хучĕç.

Тыла шăвăнса кĕнĕ есерсемпе буржуалă националиссем чухăнсен комитечĕсене хирĕç хыттăн кĕрешрĕç. Центрта сутăнчăк Троцкий продоволствăлă диктатурă тăвассине хирĕç тата рабочи клас хушшинчен продоволствăлă отрйадсем организацилессине хирĕç кĕрешнĕ пулсан, есерсемпе буржуалă националиссем, вĕсем пек ытти çÿп-çапсем вырăнсенче совета хирĕçле тĕрлĕ каварлашусем, кулаксен пăлхавĕсене хатĕрлерĕç. Паллах, вĕсен киревсĕр ĕçĕсем ăнăçулă пулмарĕç.

Чухăнсен комитечĕсем, вырăнти большевикла организаци йертсе пынипе, рабочи клас тÿррĕмĕн пулăшса пынипе кулаксенчен ытлашши тырра туртса илсе, ăна çара тата промышленнăçлă центрсене тăратрĕç. Чухăнсен комитечĕсем митингсем, пухусем, конференцисем пуха-пуха иртерчĕç. Вăл митингсем йышăннă резолюцисенче хресченсем Хĕрлĕ Çара пур йенчен те пулăшма хатĕр пулнине кăтартса панă.

Акă, 1918 çулхи октабĕрĕн 30-мĕшĕнче Старо-Тибердин вулăсĕнче пулнă пухура йышăннă резолюци. Унта хресченсем çар пушине, валли десетинран 3 пăтран пуçласа 5 пăт таран тырă Шăхран станцине (Канаш станци) тăратма пулни çинчен каланă. Малала вĕсем çапла каласа шантараççĕ: „Епĕр, Старо-Тибердин вулăсĕнчи граждăнсем, çапла пĕлтеретпĕр: Совет влаçĕ пĕрре чĕнсенех хамăр ывăлсене ăна сыхлама йаратпăр, хамăр тырă пухас тĕлĕшпе кулаксемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр... Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар! Сывă пулччăр йалти чухăнсен комитечĕсем!".

(Чăвашархивăн Çергпури уйрăмĕ, ĕç №6, стр. 41).

Акă, иккĕмĕш резолюци:

„Епĕр, Çĕнĕ-Мами вулăсĕнчен пухăннă граждăнсем, рабочисемпе хресченсен правителствине хамăрăн мĕн пур пек вăйсемпе пулăшма кирлĕ тесе йышăнтăмăр. Епĕр кулаксем тата спекулянтсем хĕсние хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр, çавăн пекех тата халĕхи вăхăтăн мĕн пур йăвăрлăхне ăнланса илсе, Хĕрлĕ Çара пĕр майах тырă тăратса тата хамăр ывăлсене йарса пулăшма пулатпăр".

(Çавăнтах, ĕç №6, стр. 107).

Акă, виççĕмĕш резолюци. Ăна Шăхазан вулăсĕнчи хресченсен 1919 çулхи йанварĕн 19-мĕшĕнче пулнă пухуви йышăннă. Унта çапла каланă:

„Пуху никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çара пĕр шухăшлăн саламлать, кирлĕ вăхăтра унăн речĕсене тăма тата хаклă тăван çĕршывпа хамăр революцишĕн хамăрăн какăрсемпе тăмашкăн кăмăл тăватпăр. Буржуазин йыт-кĕтĕвĕ пĕлсе тăтăр: епĕр çак çутă та аслă ĕçе тума йаланах хатĕр тăма пултаруа".

Хĕрлĕ Çар интернационаллă çар пулнă, халĕ те çаплах пулса йулать, ăна пĕтĕм ĕççыннисем, вĕсем мĕнле нацирен тăнине пăхмасăр, пĕр майах пулăшнă, малала та пулăшĕç,—çакăн çинчен калаççĕ документсем.

Чăваш халăхĕ Хĕрлĕ Çара тусанах ун çине йуратса пăхнă, уншăн тăрăшнă. Çав йурату кунран-кун ÿссе, анлăланса, тата çирĕпленсе пырать. Пур тăшмансем те пĕлсе тăччăр: ыран вăрçă мĕн пуçланас пулсан, чăваш халăхĕ, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсемпе пĕр пулса, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе пĕр пулса, Марксăн—Енгелсăн—Ленинăн—Сталинăн аслă ялавĕ ĕмĕрлĕхех çĕнтертĕр тесе хăй мĕн тума пултарнине пурне те тăвĕ.

И. Музыкантов.

МИХАИЛ ВАСИЛЙЕВИЧ ФРУНЗЕ
(граждăн вăрçи вăхăтĕнчĕ).

Совет планерисĕсен Пĕтĕм тĕнчери рекорчĕсем

В. М. Ильченко — Совет планерисăмĕн маçтăрĕ.

Пирĕн совет планерисăмĕ 1937 çулта питĕ те паха ÿсĕмсем турĕ.

Совет планерисĕсем инçе вĕçес тĕлĕшри пĕтĕм тĕнчери халиччен пулнă мĕн пур рекордсене çĕнтерсе пăрахăça кăларчĕç, вăл рекордсене нимĕç планерисĕсем тытса тăнă.

Совет планерисăмĕн маçтăрĕ—В. Л. Расторгуйев орденоносец пĕр вырăнлă „ГН-7" планер çинче инçе вĕçес тĕлĕшри рекорда виçĕ хутчен витсе хучĕ. Вăл вĕçсе тухрĕ: 539 километр, 602 километр тата 652 километр. Çапла майпа вăл пĕр çулта кăна пĕтĕм тĕнчери виçĕ рекорд турĕ.

Епĕ пĕтĕм тĕнчери икĕ рекорд турăм. Икĕ вырăнлă „КИМ-2" планер çинче епĕ тÿррĕмĕн 133 километр хушши вĕçрĕм, тата икĕ вырăнлă „Стахановец" планер çинче—407 километр та 660 метр вĕçрĕм.

Нумайăшĕ планер мĕншĕн пĕлĕтсемпе пĕрле вĕçнине ăнланса илеймеççĕ. Планера самолет кирлĕ çÿллĕше (300—800 метр) илсе хăпарать. Самолетран вĕçерĕнсен, планерис сывлăшăн çÿлеле хăпаракан сийне шыраса тупать, унпа усă курать, вара йавăнса çÿлеле хăпарать. Тÿрех сывлăшăн çÿлеле хăпаракан сийĕнчĕ пулас тесен, самолетран пĕлĕт çывăхĕнче вĕçерĕнсе йулмала. Пĕлĕт тĕпĕ тĕлне çитсенех, планерис ÿстерне хăвăртлăхпа тепĕр пĕлĕт патне вĕçсе куçать. Çапла майпа вара, пĕр пĕлĕт патĕнчен тепĕр пĕлĕт патне куçса пырса, планер вĕçсе хăпарнă вырăнтан айаккала кайса пырать.

Пĕлĕтсем хушшинче вĕçесси 1500 метрган пуçласа 2500—3000 метр таран çÿлĕшре пулса иртет.

Халĕ епĕ „Парения с облаками" кĕнеке çырса хатĕрлетĕп. Теориле ыйтусемсĕр пуçне, кунта чи лайăх планериссен — Расторгуйевăн, Симоновăн, Коротовăн тата ыттисен илĕртÿлĕ калавĕсене кĕртетĕп.

Халĕ пыракан 1938 çул пирĕншĕн çĕнĕ, питĕ те паха ÿсĕмсен çулĕ пулать. Совет планерисĕсем пĕтĕм тĕнчери тата халăхсем хушшинчи планерлă рекордсене штурмлама хатĕр.

(ТАСС).

Совет чикки çирĕп алăра

Пайан винтовкăран пеме пуçлатпăр, терĕ лейтенант. Епĕр ăна хавасланса йышăнтăмăр. Епĕр Широков йултăшпа ăмăртăва тухрăмăр. Тĕл пеме иксĕмĕр те аван хатĕрленнĕ. Малтан епĕ пеме пуçларăм унтан вăл. Иксĕмĕр те нормăран иртерсех тĕл петĕмĕр.

Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă куна пысăк çитĕнÿпе кĕтсе илессишĕн кашни красноармейец хăй çине обйазателствă илчĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса уйав кунне „хорошо" паллăран кайа мар вĕренме пулчĕç. Вĕсене кулленех пурнăçа кÿртсе пычĕç. Кашни кунах мĕнле вĕренсе пыни çинчен командирсем каласа тăраççĕ. Чăваш çамрăкĕсенчен Корнилов, Алексейев, Кирпичев, Пашков йултăшсем отличниксен шутĕнче тăраççĕ. Вăрçă техникине çеç мар, политика... рăшса вĕренетпĕр. Х... ветăн пĕррĕмĕш С... вĕренсе пыратпăр. ... хамăр суйланă депута... ков Çеççирен тавăр... мĕнле иртни çинчен, ... тата курни çинчен ...

Хĕрлĕ Çара килек... культуралăхĕ ÿсет, ... çирĕпленет.

Кунти çамрăксенчен ... меннисем пачах çук, ... çичĕ çул вĕреннисем ... шкул пĕтернисем. Вĕс... пропагандис, стена ... дакторĕ. Бромков йе... чăваш хорне организа... лĕрен йурăсенче чăва... вăнăçлă пурнăçпа пура... са паратпăр.

И. ...

Лайăх хатĕрленсе кĕтсе илт...

ЙЕТĔРНЕ. (Телефон тăрăх). Районта Хĕрле Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава хатĕрленесси аван пулса пычĕ. Тĕл перекенсен 9 командине организацилерĕç, вĕсем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса, тĕл пересси не мала тухассишĕн кĕрешрĕç. Пур вăтам тата туллимар вăтам шкулĕнче „Ворошиловский стрелок", „ПВХО" кружокĕсем ĕçлерĕç Педчилищĕра вĕренекенсĕм 45 çын „Ворошиловский стрелок", 164 çын „ПВХО" значок нормийĕсене пачĕç.

Иртнĕ кунсенче икĕ йелтĕр похочĕ туса ирттерчĕç. Перинче, Йетĕрнепе Палтай хушшинчи походра, çамрăксем 15 çын, тепĕринче, Йетĕрнепе Аччак хушшинчи походра, 18 допризывник хутшăнчĕç.

Районта Осоавиахим, пуçламĕш организацийĕсене çĕнĕрен 12 çĕрте организациленĕ.

Районти Тĕп библиотекă Хĕрлĕ Çар уйавĕ йачĕпе выставкă организацилерĕ.

Ник. Цветков.
Ф. Александров.

* * *

ÇĔРПУ. Фелдшерсен шкулĕнче вĕренекенсем Хĕрле Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă уйав йачĕпе ПВХО значокĕн нормисене параççĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш курссенче вĕренекенсем мĕн ... ПВХО значокĕн 2-м... нормисене пачĕç, вĕсе... „отлично" пăрса инст... илчĕç Пĕррĕмĕш кур... кенсем 89 çын пĕррем... нормăсене пачĕç.

К. ...

* * *

ЙЕТĔРНЕ. Професси... шкулĕнче вĕренекен... Çарпа Тинĕс-Çар фло... тултарнă май, оборона... лĕн вĕренме тытăнчĕç.

Уйав кунĕ тĕлне Во... тĕл перекенсен значок... пама хатĕрленчĕç. ... тата уйав кунĕнче спек... са пама „Салют" пйеса... лерĕç.

А. ...

* * *

ЙЕТĔРНЕ. Палтайри... шкулта вĕренекенсем Хĕ... Тинĕс Çар флочĕ 20 çу... уйава тивеçлĕ хатĕрле... илеççĕ.

Халĕ шкулта 30 ача ... чокĕн нормисене пачĕç. ... рă кружоке „Çамрăк ху... литературă журналĕ ... журналта кружок члене... Çар çинчен çырнă сав... лавсем пулаççĕ.

В. ...

Епĕр аван вĕренсе пыра...

Епĕр, Чăваш республикĕнчен килнĕ красноармейцăсем тăватă çамрăк, кĕçĕн командирсен шкулĕнче вĕренетпĕр. Хамăр пĕлÿве хăпартас пирки взводпа взвод, отделенипе отделени, курсантпа курсант социалисăмла ăмăрту договорĕ тунă. Договора мĕнле пурнăçласа пыни çинчен кашни пилĕк кунта тĕрĕслесе, пĕлтерсе пыраççĕ. Епĕр, чăваш курсанчĕсем, вĕренÿре „хорошо" тата „отлично" палласемшĕн кĕрешетпĕр. Сергейевпа Леонтйев курсантсене лайăх вĕренсе пынăшăн отличниксен хăми çине çырса хунă.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă куна çарпа политика ĕçне „отлично" вĕреннипе кĕтсе илетпĕр.

Кашни кунах ... лĕрен хаçат-жур... раççĕ. Унтах ... кинчи хаçатсене ...

„Салют" пйе...

ТРАК. Итмар ... лав çурчĕ çум... Хĕрлĕ Çарпа ... 20 çул тултарнă ... кан „Салют" пйе... хатĕрлерĕ. Круж... лĕ Çар çинчен ... каласа пама вĕр...

Паттăр Хĕрлĕ Çар

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарни—пĕтĕм совет халăхĕн праçникĕ. Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флот—совет халăхĕн йуратнă ачийĕ. Хĕрлĕ Çарпа флотăн паттăр кĕрешĕвĕн историйĕ пĕтĕм совет халăхĕ хăй ирĕкĕшĕн, никама та пăхăнса тăрас марришĕн, рабочисемпе хресченсен влаçĕшĕн, социалисăмшăн кĕрешнĕ историпе таччăн çыхăнса тăрать.

Патша самодержавине, капиталисăма хирĕç пулнă хăйар çапăçусенче Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пролетариат хăйĕн çар организацийĕсем турĕ.

1905 çулхи декабĕрти баррикадăсен вут-хĕмĕнче, Октабĕршĕн çапăçнă чухне, пролетариатăн революцилĕ çарĕн малтанхи никĕсĕсем хывăнма пуçланă. Пролетариат диктатурине туса лартнă хыççăн, красногвардейецсен отрйачĕсемпе хĕрлĕ партизансен отрйачĕсем социалисăмла революци çĕнтерсе илнисене сыхлас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăчĕç. Вĕсем шалти контрреволюцин бандисене—Керенскине, Краснова, Дутова, Каледина аркатмалах çапрĕç, Украинăна пырса кĕнĕ нимĕç хурахĕсене те аркатрĕç.

1917 çулта рабочи отрйадсенчен чи паллăраххи Луганскри Клим Ворошилов йертсе пыракан, чи пирвайхи рабочисен социалисăмла отрйачĕ пулнă. Луганскри Ворошилов йултăш пуçарувĕпе тунă тата вăл пăхса ÿстерне рабочисен отрйачĕсем нимĕç вăрă-хурахĕсемпе гайдамаксене хăйăррăн çĕмĕрсе тăкнă.

Совет Союзĕн мухтавлă маршалĕсем—Буденный, Блюхер, Украинăн легендарлă герое Щорс Совет влаçĕшĕн хăйсен чи малтанхи çапăçувĕсене партизансен отрйачĕсен пуçĕсенче пулса ирттерчĕç.

1918 çулти февралте нимĕç империалисĕсем пирĕн çĕршыва кĕрсе кайрĕç. Вĕсене тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Троцкий тата унăн бухаринла йыттисем Брестра килĕшÿ çинчен каласвă вăхăтра, хăйсен сутăнчăкла ĕçĕпе çамрăк пролетарилĕ государствăна çĕмĕрсе пĕтерме пулăшрĕç. Нимĕç вăрă-хурахĕсем ирĕклĕ Советлă Украинăпа Белоруççине хăйсен колонийĕсем туса хурасшăн пулчĕç. Вĕсем уççăнах, пысăк çул çинчи вăрă-хурахсем йевĕрлĕ, Советлă Украинăн пысăк пуйанлăхне—тырă, выльăх, рудасем çаратса илсе кайрĕç. 1918 çулти нойабĕрĕн 28-мĕшне нимĕç оккупанчĕсем Украинăран йутçĕршывсене 9293 вагон тырă, 23.155 вагон çимĕçсем, 4.507 вагон тĕрлĕ чĕр тавар (резинă, пир-авăр, руда) илсе тухса кайнă. Украинă ĕççыннисем пĕр çын пек пулса хăйсен тăван çĕршывне сыхлама тăчĕç. Пĕтĕм Украинипе партизансен йухăмĕ анлăн вĕресе тăнă. Хĕрлĕ Гвардин отрйачĕсем Совет çĕрĕн кашни пусăмнех кăкăрпа сыхласа тăнă, оккупантсен атакисене паттăрăн çапса çĕмĕрсе пынă.

Рабочисемпе хресченсен ирĕклĕхне пĕтерме, помещикла-буржуазиле пусмăрлăха тепĕр хут туса лартма хăтланакан шалтипе тулти тăшмансене хирĕç вăрăм вăхăт хушши тата пĕтĕм вăйпа пысăккăн хĕçпăшалланса кĕрешмеле пулассине лайăх ăнланса илсе, большевиксен партийĕ пĕтĕм вăйпа централизацилĕ регулярлă Хĕрлĕ Çар тума тытăнчĕ.

1917 çулхи декабĕрте Хĕрлĕ Çара туса йĕркелес тĕлĕшпе Пĕтĕм Российăри коллеги организациленет. Организацилĕ тата агитацилĕ ĕçе йертсе пыма парти тĕрĕсленнĕ большевика Лазарь Моисейевич Кагановича лартать.

1918 çулти йанварĕн 28-мĕшĕнче Ленин Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне тăвасси çинчен историлĕ декрет алпусса кăларать.

Хĕрлĕ Çар „ĕççыннисен класĕсенчи чи ăнлавулă тата органицилĕ елементсенчен" пулса тăчĕ. Експлоататăрла классемшĕн çара кĕме алăк хупăннă.

Декретра уйрăмăнах Хĕрлĕ Çар—Октабĕр революцин çарĕ, пролетарилĕ диктатурăн çарĕ пулни палăрса тăнă.

Пĕрлĕхлĕ, централизациленĕ, хурçă дисциплинăпа сыхăнса тăракан Хĕрлĕ Çара организацилес тĕлĕшпе пулнă кĕрешÿре регулярлă çара организацилессине хирĕç, çарта дисциплинăна çирĕплетессине хирĕç, комиссарсен институтне тăвассине хирĕç тухнă троцкисла-бухаринла сутăнчăксене парти çапса хуçрĕ. Троцкисла-бухаринла сутăнчăксем йутçĕршыв захватчикĕсемпе вырăс шургвардейцисене совет çĕршывне тĕпĕ йĕрĕпех çаратма май туса парасшăн пулнă.

Совет Российĕнчи рабочисемпе хресченсем, Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçсе, хăватлăн кĕрешме пултаракан, дисциплинăлă, тĕнчере чи пирвайхи рабочисемпе хресченсен çарне кĕске вăхăтрах туса хучĕç.

Партипе совет правителстви чĕннипе çĕнĕ çарăн—революцилĕ халăх çарĕн—çамрăк отрйачĕсем социалисăмла тăван çĕршыва сыхлама нимĕç тискер кайăкĕсене хирĕç кĕкринĕсемпе тăчĕç.

Нарвă, Псков патĕнче нимĕç оккупанчĕсене вирлĕ те татăклă отпор панă. Вĕсем Петроград çине пырассине чарса лартнă. Февралĕн 23-мĕше—Германи империалисăмĕн çарĕсене отпор панă кун—мухтавла Хĕрлĕ Çарăн йубилей кунĕ пулса тăчĕ.

Çамрăк Совет республикĕн тата Хĕрлĕ Çарăн калама та çук йăвăр вăхăтра хăйар кĕрешÿ туса пымала пулчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери буржуази Российăн пĕтĕм контрреволюцилĕ вăйĕсене организацилесе, вĕсене пур йенчен те хĕçпăшаллантарса, совет республикине пăвса лартма йачĕ.

Пĕтĕм тĕнчери буржуази Мурманска туртса илсе, Владивостока Йапони çарĕсене илсе пырса, Чехословаксен пăлхавне хатĕрлесе совет çĕршывне хирĕç вăрçăлă интервенци пуçласа йачĕ.

Антантă совет çĕршывне шалтан аркатма хăтланчĕ. Вăл хушнипе Йарославлре, Рыбинскра вăрçăлă пăлхавсем пулса иртеççĕ. Мускавра „сулахай" есерсен контрреволюцилĕ пăлхавĕ. Каварлăх пуçĕнче—Англи разведчикĕ Локкарт.

Çак условисенче çамрăк Хĕрлĕ Çар умĕнче калама çук пысăк, историлĕ задача тăчĕ: социалисăмла тăван çĕршыва шургвардейцăсемпе интервентсен пĕрлешнĕ вăйĕ таппанинчен сыхласа тытса тăрасси.

Ворошилов йултăш йертсе пынипе Украинăри рабочисен отрйачĕсем нимĕç оккупанчĕсемпе хăйаррăн кĕрешеççĕ. Херлĕ Гвардин саланса кайнă отрйачĕсем кĕрешÿ пынă вăхăтра пĕрлешсе пысăк соединенисем тăваççĕ. 1918 çулхи çулла пирĕн революцишĕн питĕ те йăвăр тапхăр пулчĕ. Çĕршыва тăшмансем çавăрса илсе. Çĕпĕр тата Украинă тырпулĕсĕр тăратса хăварчĕç. Мускавра рабочисем кунне 1/8 кĕренке çăкăр илнĕ, ăна та йĕркелĕ илсе тăрайман. Çăкăршăн кĕрешни — социалисăмшăн кĕрешни пулса тăчĕ.

Çав вăхăтра нимĕç оккупанчĕсем пулăшнипе кантарти контреволюци хĕвелтухăçĕнчипе пĕтĕçсе, пĕрлешнĕ вăйсемпе Мускав çине кайма тытăнать.

Контрреволюци вăрçăпа çĕмĕрсе тăкма шутласа Царицын çинеле пырать.

Совет республикине пулас вызлăхран çăлма Ленин Царицына Сталин йултăша йарать. Сталин йултăш хулана сыхлас ĕçĕн пуçне тăрса, ăна шургвардейцăсен каварлăхĕнчен тасатрĕ, сутăнчăк Троцкий лартса тухнă тăван çĕршыва сутакансене штабсенчен кăларса çапрĕ, вĕсем вырăнне революцишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен çынсене лартрĕ. Кĕске вăхăтрах Сталин йултăш фронтра тата тылра революцилĕ йĕркелĕх туса хучĕ. Вăл ийунь уйăхĕнчех промышленнăç центрĕсене 2 мĕлйун пăт ытла 2379 вагон тырă йачĕ. Сталин йултăш контрреволюцин планĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса çĕмĕрчĕ. Сталин Ворошиловпа пĕрле тăшмана Царицын патĕнчен сирсе пăрахрĕ. Царицын патĕнче пролетари полковочĕн Ворошилов йултăшăн çутă талантĕ пĕтĕмпех палăрчĕ. Царицын патĕнче Буденныйăн Хĕрлĕ утлă çарĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ.

Ворошилов йултăш йертсе пыракан Украинăри партизансен отрйачĕсем çĕмĕрсе тăкнă май, Херлĕ Çар чаçĕсем хĕснĕ май, оккупантсем хăраса тарма пуçларĕç. Нойабĕрĕн 13-мĕшĕнче Брестра тунă вăрă-хурахла договора пĕтернĕ. Нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешес ĕçре Германи пролетариачĕ пысăк вырăн йышăнчĕ, Вильгелма çавăрса çапса, Брестри договора та пĕтерсе хучĕ.

Брестри договора пĕтернĕ хыççăн, хĕвелтухăç фронтра йăвăр лару тăру пуçланчĕ, унта Колчак ахăрнă. Ленин директивисене пăсса пыракан, тăван çĕршыва сутакан Троцкин сутăнчăкла ĕçĕ нĕ пирĕн, 1918 çулхи декабĕрĕн 24-мĕ... пĕтĕм хĕвелтухăç... кĕрес хăрушлăх...

Фронтри лар... йепле пулнă, ... парти Сталинпа ... рать. Сталин йул... тăнчăклă ĕçĕсен ... хыттăн кĕрешсе, ... сах лайăхлатса ...

1919 çулта çур... империалисăмла ... сăнчăрти йыттис... сĕр вырăс гене... пулчĕ.

„Деникинпа Кол... Врангел Россий... хирĕç кĕрешнин... Сталин йултăш ... шалти кĕрешÿ ... тартма пăхнă. Ну... пĕлнĕ, епĕр те ... тĕнче контрревол... нералĕсен хыçĕнче... рика, Францipe ... алисăмĕ тăнине ... лăшман пулсан ... лехлĕ граждăн вăр... ман—пулĕччĕ". (... оппозиции, стр. 42...

Антантă Совет ... рĕç виçĕ поход ...

„1919 çулта çурку... çийиве хирĕç Кол... нăн, Йуденичăн пĕр... не шутласа кăлар... çапаçува Колчакăн ... унпала Деникин ... лешсе хĕвелтухăç ... çине иккĕн пĕр ... шухăшланă. Йуденич... çапма май панă ... „Статьи и речи ... стр. 81).

Çав вăхăтра Кол... Совет Российĕ çине ... хăшласа тунă ... кĕрсе, хĕвелтухăçри ... тупленине курĕ, ... роград патне шăвăнса ... ла вара „Красная ... „Серая лошадь" ...

Совет çĕршывĕн хĕçпăшаллă отрйадне хĕрÿлĕ салам!

[illegible] лăра

олитика[illegible] ĕр. Халĕ [illegible] Çеççин [illegible] ăр. Асл[illegible] депутат М[illegible] таварăнса[illegible] нчен, Ст[illegible] ичен кал[illegible] килекен [illegible] ет, вĕсе[illegible] ксенчен [illegible] çук, çÿ[illegible] висем [illegible] ем. Вĕсен[illegible] стена хаç[illegible] ков йерт[illegible] рганизаци[illegible] е чăваш [illegible] а пуран[illegible]

И. А[illegible]

илтĕ[illegible]

мĕн [illegible] ĕн 2-мĕ[illegible] ĕç, вĕсен[illegible] а инстр[illegible] ĕш курс[illegible] пĕррем[illegible] ĕç.

К. М[illegible]

* *

Професс[illegible] ренекенсе[illegible] ар флоч[illegible] оборона[illegible] ытăнчĕç[illegible] тĕлне В[illegible] н значок[illegible] нчĕç. Ç[illegible] ĕнче спек[illegible] т" пьеса[illegible]

А. [illegible]

* *

Палтай[illegible] екенсем Х[illegible] очĕ 20 ç[illegible] е хатĕр[illegible] а 30 ач[illegible] ене пачĕ[illegible] Çамрăк [illegible] урнале [illegible] жок член[illegible] ырнă са[illegible] ĕ. В[illegible]

ратпăр[illegible]

р. [illegible] куна IX Ленин[illegible] çат журнал[illegible] Унтах Чăва[illegible] çатсене те [illegible]

И. [illegible]

[illegible]ут" пьесăна [illegible]

Итмар йалсо[illegible] нĕ çумĕнчи [illegible] Сарпа Тинĕ[illegible] ултарнă кун [illegible] ут" пьесине [illegible] ĕ. Кружок ч[illegible] синчен çыр[illegible] ама вĕренчĕ[illegible]

Р. [illegible]

Епĕр—çирĕп часовойсем

[illegible] кăвак çутă ир.

[illegible] ылмалăх ытамĕнче йал-[illegible]

[illegible] пирĕн ир йешĕрешĕ[illegible] илемлĕ, хитре, тул[illegible] илемлĕхпе, саванăçпа [illegible] чуна хĕпĕртеттерет.

[illegible] тупасшăн, çак ире па[illegible] лăпкăлăхпа ăмсан[illegible] пирĕн тетесем, пирĕн [illegible] пуçĕсене шеллеме [illegible] Тăнă кăкăрпа çакă [illegible] пирĕн те парăнман пи[illegible] тетесем. Çын кĕми чăт[illegible] тухса, пÿ çитми тарăн [illegible] касса, халиччен [illegible] сукмаксем тăвăх вăр[illegible] вут витĕр вĕсем [illegible] хÿтерне. Хĕç çиçнĕ те—[illegible] тупа кĕрĕслетнĕ те—[illegible] чăваннă. Çуннă, ÿк[illegible] ман! Татăлна тăшман [illegible] тăшман çулех.

[illegible] тăлнă шурăмпуç. Вар[illegible] йалав. Çиçнĕ пилĕк [illegible] Йерипен хăпарса пы[illegible] пурнăçăн хĕвелĕ те.

[illegible] Октаберте кĕрешсе [illegible], йун витĕр çăвăнса [illegible] пурнăçăн ирне сыхла-[illegible]

* *

[illegible] выран—чикĕ мар. [illegible] кĕмметртă. Çапах та [illegible] ăх: час часах шпион[illegible] пулкалат, фашиссен [illegible] тĕтĕме пĕлмен ша[illegible] тран-сигрен постсем [illegible] тухни çинчен, вĕсе[illegible] пăттăр бойец [illegible] саксем çÿреççĕ. Чи[illegible] ерсен—ыррине ан кĕт, [illegible] латăн. Тăр кăнтăр[illegible] сакне пултарат: вĕ[illegible] та пулаççĕ—„чипер [illegible] калаçаççĕ, „çул çÿрев[illegible] çаç,ĕ—çул кăтартса [illegible] саксене асра тытса [illegible] пирехсĕн чăмарта-[illegible]

[illegible] уйарăлса тăрат...

[illegible] çамла йĕри-тавралăх [illegible] Сталин йулташ калнине [illegible] хрестĕп епĕ кунта. [illegible] пирĕн пата хăйсен [illegible] диверсанчĕсене, про[illegible] ене йараççĕ.

[illegible] çамла тĕнчепе капитали[illegible] хушшинчи уйрăмлăх [illegible] пекех. Пĕр тĕнчин [illegible] Тепринче—çутă ир.

[illegible] саккунĕ, кашкăрла [illegible] сынна çийет...

[illegible] çĕршывра çынна çын пус[illegible] ĕмĕрлĕхех тĕп пулнă.

Пирте халĕ—влас, пирте—ишĕлми викĕс, пирте—çĕнтерÿ.

Çĕр чăмăрĕн çутă йенĕ—пирте

Ку çутă йен—социалисăм тĕвчи Ку çутă йен—пирĕн çамрăк чĕресене уççăн та анлăн савăнтаракан йурăсен пахчи, ку—çĕнĕ механисăмсемпе, шавлă моторсемпе çĕнтерÿлĕн йантăракан мухтавлă çĕршыв! Кунта геройсем мĕлйукĕпе шутланаççĕ. Кунта—çĕнтерÿ марше, кунта—саванăç йурри, кунта—çунат кĕвви йанарат, кĕрлет, шарынат. Улшăнса çĕнелет етем чĕри, хĕвел хăйулăхĕпе пахатпăр епĕр малала.

Çĕршыв хăватланат, ÿсет çĕршыв!

Урал çинче Магнитогорск домнисем, Баку çывăхĕнче Биби—Ейбат нефт вышкийĕсем, Днепр çинчи електростанци чаплă плотини, Горькин автозавод,—мĕн чухлĕ илем кÿрекен пуйанлăх пирĕн çĕршывра! Атăл шывне Мускавпа пĕрлештерне, çĕр айĕнче трамвайсем чупаççĕ: Мускав йалтăртатат. Сталинск, Ленинград, Кийев, Харьков, Ташкент, комсомольск хулисем çĕршыв чĕрçи çинче çăлтарсем пек çиçеççĕ. Револьуцичен контрреволюци вучахĕ пулнă тĕттĕм кĕтессем—Çĕпĕр, Казахстан, Туркменистан, Узбекистан т. ыт. те пайан рудасем шаратаççĕ, машинасем туса кăлараççĕ. Халиччен нефт шăршине шăршласа курман пушхир халĕ гигантлă Карагандă вышкисенчен нефт сирпĕтет Çырла-улмалă Алма-Атăран Çĕ ере пуйăс кайат, пушхир паро оз сассине тĕпренех хăнахнă. Конвейерсем çавранаççĕ. Електровозсем чупаççĕ. Çурмамăке ăнса шурă кăпăк пек ÿсет. Тулли те пуйанçке çĕршыв! Саванăçлă çакăн пек пуйан çĕршыва сыхлама. Епĕр хамăрăн йуратнă çĕршыва çирĕппĕн сыхласа тăратпăр.

Пограничник Гаврилов йулташ „пулă тытма кайакан колхозник" пулнă тискер шпиона кусма-кусăн тăрса чĕрĕлех йарса тытнă. Галушкин йĕлтерпе çÿрене чухнех пĕччен икĕ шпиона тытса чарат.

Пирĕн Инçетри Хĕвелтухăç чиккинче Семен Лагодапа Григорий Мичурин хисеплĕ дозорта тăнă чух тăшмансен сивĕ пульуи тивнипе вилсен, вĕсен вырăнне хăйсен шăллĕсем тăнă: Иван Мичурин, Василий Мичурин, Димитрий Лагода тата вĕсен тăванĕ—Иван Лагода. Хале Мичуринсемпе Лагодасем вăрçă техникине хĕрсе вĕренме тытăннă. Çапла: пĕри ансăртран ÿксен, ун вырăнне пирĕн темиçешерĕн тухса тăраççĕ. Пĕр герой вырăнне темиçе герой çуралат. Çирĕппĕн хураллатпăр сана, тăван çĕршывăм!

Красноармеец А. Петров.

„...На протяжении ряда лет Советская Власть сумела добиться того, что наша родина имеет теперь в своем распоряжении, как проверенные карательные органы и хорошо оснащенную Красную Армию, так и последовательно проводимую политику мира в области внешних отношений..."

Укерчĕк çинче: Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Изогиз кăларнă А. Лазарев художник плакачĕ.

(Союзфото репродукцийĕ.

Пире Сталин йертсе пычĕ

*Украинă халăх йурри *)*

Ой, кĕрлетçке Хура тинĕс,
Хум çапат çеç сыпана.
Украинă çĕре çийен
Çăхан çарĕ йавăнат.

Ой, вĕçеççĕ, иртĕхеççĕ,
Суранлăç чун-хавала,
Украинă, Украинă,
Çаратаç сан вăй-хална!

Ашкăнатçке пан Петльурă,
Шăварат çĕре йунпа.
Ашкăнатçке Скоропадский,—
Ахлату, куççуль кăна...

Тăван çĕр çине Петльурă
Лартса тухрĕ такансем,
Хăйар гетман Скоропадский
Çакса тухрĕ [illegible]сем.

Кам сана тăван çĕршывăм,
Çăлчĕ çакă пусмăртан?
Пусмăртан та, хурлăхран та
Тата ирсĕр мăшкăлтан?

— Ей, çĕкленĕр!—терĕ Ленин,
— Ей çĕкленĕр хуласем!
— Ей, çĕкленĕр!—терĕ Сталин,—
Йăвăр ĕçен çыннисем.

Тарăн шахтăсенчен тухрĕç
Коногонсем-маттурсем.
Заводсем çĕкленчĕç, тухрĕç
Слесăрсемпе тимĕрçсем.

Мĕн пур чухăнсем пуçтарăнчĕç,
Илтрĕç ирĕк йыхрава.
Пире Сталин йертсе пычĕ
Аслă—чапла ĕç тума.

Шăрлă тинĕс хумханатçке,
Сталин хирĕç тăшмана.
Ăраслан пек çапăçаççĕ.
— Пултăр çĕнĕ самана!

Ак лăпланчĕ Хура тинĕс,
Хăйар тăвăл алхасмаст.
Украина, т(ă)ван аннеçĕм,
Сталина савса йурлат.

„Творчество народов СССР" йатлă кĕнекерен.

И. Тукташ куçарнă.

*) Украинă ССР-че, Одессă облаçĕнче, Первомайский районра, Миша йатла йалта çырса илнĕ.

Часовой

Уйăх йăпшăнса хăпарчĕ
Кăвак, тăрă тÿпене.
Двина шывĕ кăшт хумханчĕ,
Унта уйăх чÿкенет.

Çывăратĕ Белоруççи,
Кашласа тăрат вăрман.
Йăпшăнса çÿрет çил, уççăн
Ачашлат пит-куçăма.

Епĕ кашлакан вăрманăн
Чат ăхне тек тинкĕреп.
Алăра винтовкă манăн,
Еп тăратăп чикĕре.

Çĕршыва сыхлатăп çирĕп:
Чикĕ урлă диверсант
Каçас çук нимле те, пирĕн
Часовой сыхă тăрсан.

Нийепле хăйар тăшман та
Хăратаймĕ хаçь пире.
Йувлă аллине тăсат-тĕк,
Тĕптăватпăр пур-пĕрех.

Епĕр паттăр, вăйлă, çирĕп,
Епĕр—çулăмлă кăвар.
Никамран та, нихăçан та
Хăраман вăл, Хĕрлĕ Çар.

Пограничник А. Иванов.

„Маршал ача чухнь" пьесăна лартса параççĕ

ЙЕТĔ НЕ. Мăн-Йĕкĕрти туллимар ватам шкулта драмкружок организацилерĕç. Кружокра мĕн пурĕ 32 ача. Заньатисем ернере пĕрре пулса иртеççĕ. Кружок Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă кун лартма „Маршал ача чухне" пьеса хатĕрлерĕ.

Ф. Дедушкин.

64 çын ПВХО значокĕн нормине пачĕç

Шупашкарти Педагогикă училищинче вĕренекенсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле 64 çын ПВХО значокĕн нормисене пачĕç

И. Лукин.

Епĕр паттăр, епĕр çирĕп

Епĕр кунта, Украинăра, чăваш çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çарта чылайăн пурăнатпăр. Пурнăç аван, кун-çĕр иртни сисĕнмест. Пирĕн валльи кунта пурте пур: вăхăтсене савăнăçлă, культурăллă иртеретпĕр. Час-часах калаçакан кино кăтартаççĕ. Канмали кунсенче музейсене, цирксене кайатпăр. Пĕтĕм вăйпа вăрçă техникине алла илессишĕн кĕрешетпĕр, социалисăмла ăмăртса вĕренетпĕр. Хамăр Тăван Çĕршыва хамăр куçшăрçине сыхлană пек сыхлатпăр.

Пирĕн кунта чăваш ачисенчен вĕренÿре отличниксем сахал мар, Петр Михайлов Хĕрлĕ Çара киличчен Вăрмар районĕнчи Мăнтăр йалĕнчи колхозра бригадир пулса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çарта тăван çĕршыва сыхлама „отлично" вĕренет. Тата Павел Краснов, Вăрмар районĕнчи „Большевик" колхозран, çавăн пекех Артизанов Шăхасан районĕнчи Атнаш йалĕнчен, Канашри вагонсем йусакан заводра рабочи пулнăскер. Чăвашсенчен полк шкулĕнче вĕренекенсем те сахалах мар. Семенов, Павлов йулташсем командир пулма вĕренеççĕ.

Епĕр çитес çулсенче Хĕрлĕ Çара килекенсене хальхи вăрçă техники малала кайнă май, 3—4 çул çеç хут вĕреннипе ăна алла çавăрса илме йăвăртараххи çинчен çырса пĕлтеретпĕр. Çавăнпа Хĕрлĕ Çара киличчен вĕренме тăрăшăр. Кунти чăваш çамрăкĕсем пурте 5—6 çул вĕреннĕскерсем пулсан та, общеобразовательный шкулра вĕренетпĕр. Ку шкулсенче вĕрентекенсем хамăр Хĕрлĕ Çар хушшинченех, вĕсенчен чăвашсем те пур. Пире Вăрмар районĕнчи туллимар ватам шкулта ĕçленĕ Биктимиров йулташ лайăх вĕрентет. Вырăс чĕлхипе калаçнине ăнланаймасан, пире, чăвашсене, хамăр тăван чĕлхепе ăнлантарса парат, пур ĕçре те вăл пире пулăшат.

Епĕр чăваш ачисем хамăр чăваш искусствине ытти нацисене кăтартатпăр, клубсенче чăваш йуррисене йурласа, ташласа паратпăр.

П. Михайлов, Семенов,
А. Кириллов, Павлов.

Оборонă ĕçне вăйлатнипе кĕтсе илтĕмĕр

** Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине Игмар йалсоветĕнче (Трак р.) оборонă ĕçне вĕренессине вăйлатнипе кĕтсе илчĕç. „14 лет Октября" колхозра 12 çынран Осоавиахим организацине организацилерĕç. Халĕ Осоавиахим членĕсем винтовкăпа противогаз çинчен вĕренеççĕ. „Ворошиловский стрелок" значокĕн нормисене параççĕ.

Р. Филиппов.

** Çĕрпÿри фельдшерсен шкулĕнчи Осоавиахим организацийĕ Çĕрпÿ—Шупашкар — Çĕрпÿ маршрутпа йĕлтĕрлĕ поход туса ирттерчĕ. Çак кунсенче „ПВХО" нормин 1-мĕш сыпăкне парса 80 çын, 2-мĕш сыпăк нормисене парса 10 çын значоксем илчĕç.

Н. Йадровкин.

[illegible]вĕлтухăç фр[illegible] ушлăх туса [illegible] н лару-тăру [illegible] лнă, çавăн [illegible] алинпа Дзерж[illegible] ин йулташ, [illegible] ĕçĕсен йул[illegible] решсе, лару[illegible] лагса хурат[illegible] лта çуркунне[illegible] сăмла гос[illegible] йыттисемпе [illegible] с генералĕс[illegible]

нна Колчак[illegible] Российăри [illegible] решнине,—те[illegible] йулташ,—ин[illegible] шÿ вырăн[illegible] нă. Ну епĕр[illegible] р те çеç [illegible] рреволюцил[illegible] хыçĕнче Ан[illegible] ципе Йапон[illegible] нине пĕлвĕ[illegible] улсан Росс[illegible] дăн варçи [illegible] чĕ". (И. [illegible] стр. 425).

Совет Рос[illegible] поход орган[illegible] га çуркунне [illegible] ĕç Колчакăн [illegible] чăн пĕрлеш[illegible] а кăларнă [illegible] олчакăн тума[illegible] никин Сар[illegible] тухăç йенч[illegible] пĕр пул[illegible] Йуденича [illegible] панă". ([illegible] речи об[illegible]

гра Колчак[illegible] йĕ çине [illegible] нă плана[illegible] тухăçри фр[illegible] çре, Йуд[illegible] шăванса [illegible] Красная Гор[illegible] фортсен[illegible]

[illegible] алхав сиксе тухрĕ. Пет[illegible] çар заговорĕ организа[illegible] заговор пуçĕнче Англи[illegible] Поль Дÿкс тăнă.

[illegible] лару йăвăр пулнă. Парти [illegible] тăван çĕршыва сыхлас[illegible] мобилизацилет.

[illegible] VIII-меш сйесĕ 1919 çул[illegible] уйăхĕнче Хĕрлĕ Çара [illegible], Совет государствин [illegible] зацилене регулярлă çар[illegible] тата ватам хресченпе çи[illegible] союз тăвас паллапа пулса [illegible] Троцкин çара парти йенчен [illegible] прассине петерсе лартма [illegible] Ленинпа Сталин çав ки[illegible] сутанчакла ĕçĕсене çе[illegible] аççĕ. Колчака—Антантан [illegible] ставленникне—тĕп тума хĕ[illegible] фронта тĕреслеинĕ [illegible]—М. В. Фрунзене иа[illegible] В. Фрунзе, В. В. Куй[illegible] пĕрле, Хĕрлĕ Çарсене [illegible] хирĕç наступлени илсе

[illegible] тухăçри фронта 10 пин [illegible] асатаççе. Профсойузсем [illegible] 30 пин рабочи йана, ком[illegible] хайĕм членĕсене пысак[illegible] мобилизацилет.

[illegible] градра йăвăр лару-тăрува, [illegible] сутанчаклан хăгланнипе [illegible] йăвăрланса каинă лару-тару[illegible] ăлатса йусама партин Теп [illegible] ĕ, Ленин сĕннипе, Сталин [illegible] йарат.

[illegible] йулташ „Красная Гор[illegible] тата „Серая лошадь" ри[illegible] вăрттăн пĕтерсе лартат, [illegible] градри лару-тăрува йĕркене [illegible] ерет.

[illegible] çулхи ноябĕрĕн 20-мĕшĕн[illegible] Российăри Ĕçтăвакан [illegible] Комитет Сталин йулташа Хĕр[illegible] орденĕпе наградăлат.

[illegible] кал йăвăр вăхăтра Пĕтĕм [illegible] Чрезвычайлă Комиççи [illegible] Феликс Дзержинский пуç [illegible] йертсе пынипе, Петроградра [illegible] говорне тăрă шыв çине ка[illegible] [illegible] ăна пĕтерсе [illegible]

нича çĕнтерессине калама çук пысăк выран йышăнчĕ.

Çак мерăсене йышăннине пула, парти Колчака тĕп тума пултарчĕ. Колчака çĕмĕрсе тăкнă çĕрте чаплă полководец М. В. Фрунзе калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат. Вăл В. В. Куйбышевпа пĕрле чейе те ăслă маневарсĕм туса, Колчака кайала хавалат, вăл Колчака çĕмĕрсе такичченех ун çине хăварт тапанса пырас ĕçе организацилеме пултарна. Парти Троцкин сутăнчăкла планне, хамăра паранма сĕнекен плана, мĕн пур курайманлăхпа тата хайарлăхпа сирсе пăрахат. М. В. Фрунзе йертсе пына чаççем хушшинче пуринчен ытла Чапайев дивизийĕ хăйен паттăрлăхĕпе тата хăйулăхĕпе паллă пулса тăнă. Хĕрлĕ Çар кĕрешÿре çирĕпленсе ÿсе çитĕннĕ. Антантăн пĕрремĕш походне çĕнтерÿлен сирсе парахнă.

Совет республикĕ хăйĕн вăйĕсене пухса çитерме ĕлкĕреймерĕ те, унан каллех Антантăн хĕçпăшалланнă ордисемпе тĕл пулмала килчĕ.

„1919 çулхи кĕркунне походăн çĕмĕрмели планне çĕнĕрен шухашласа хунă. Колчака, паллах, шутран кăларса парахнă пулнă. Походăн тĕп вырăнне кунинче хĕвелтухăçĕнчен кăнтăра куçарнă. Деникин çавăнтан пырса хытăн çапмала пулнă".

Совет республики каллех вутлă ункăна кĕрсе ÿкрĕ. Антантă тарçисем республикăна тул йенчен хĕсрĕç тата шалтан аркатма хăтланчĕç. Антантăн тĕп ставленникĕ—Деникин Орел патне çитрĕ, Мускав умне хăрушлăх кăларса тăратрĕ. Йуденич Петроградă çĕнĕрен илессипе хăратнă. Есерсемпе меньшевиксем 1919 çулхи октабĕрĕн 25-мĕшĕнче партин Мускав Комитечĕн çуртне [illegible] организацилеççĕ. [illegible] Йуденичсем [illegible] Тĕп Коми-[illegible]

тет Ленин тата Сталин йертсе пынипе пĕтĕм çĕршыва Деникинпа кĕрешес ĕçе мобилизацилет. Кăнтăри фронта 20 пин коммунист ытла асатаççĕ, комсомолан Пĕтĕм Российăри мобилизацийĕ тăрах 10 пин комсомолеца фронта мобилизацилеççĕ, профсойузсем фронта 36 пин рабочи йараççĕ. 1919 çулхи октабер уйăхĕнче парти ернелĕхĕ туни çинчен пĕлтереççĕ. Нумай пин рабочисемпе хресченсем партине кĕрсе, çийĕнчех Деникина хирĕç çапăçма фронта кайаççĕ.

Деникина çĕмĕрсе аркатма парти Сталин йулташа хушат.

Сталин йулташ сĕнÿвĕ тăрăх, парти Тĕпкомĕн решенипе сутăнчăк Троцкийе кăнтăрти фронт ĕçĕсене хутшăнассинчен пăчах сирсе хураççĕ. Фронтри лару-тăрупа вырăнта паллашса Сталин Ленин патне çыру çырат, унта вăл хăйен Деникина аркатса тăкмали тĕ илĕ планне кăлартса парат тата сутăнчăк Троцкин „поражени" планен пĕтĕм çĕрĕклĕхне кăтартса парат.

Ленин патне йанă çырура Сталин йулташ çакна çине гарса пурнăçа кĕртме ыйтнă: Деникина хирĕç тĕп кĕрешÿве Царицын—Новороссийск йенчен мар, совет власне хирĕçле шухăшлă выльăнтан мар, промышленнăçлă центрсем урлă,—Харьков, Донбас, Ростов урлă тумала, мĕншĕн тесен „унти халăх пирĕн çине тăшманла мар, йалтах урăхла, пире йуратса пăхат, çакă вăл пире малала кайма çăмăллатат".

Ленин тата большевикла партин Тĕпкомĕ Сталин йулташăн çав планне пĕтĕмĕшпех ырланă. Çав плана пурнăçа кĕртни Деникина—Антантăн тĕп ставленникне çĕмĕрсе тăкассине татса панă.

Кăнтăр фронтĕнчи çарсем Орел [illegible] Азов тинĕсĕ [illegible] [illegible] [illegible]

витĕр тухрĕç, вĕсем 40 пин çын ытла тыткăна илчĕç, 700 тупă, 1000 пулемет ытла туртса илчĕç.

Деникина çĕмĕрсе аркатас ĕçре пирĕн Хĕрлĕ утлă çар тата унăн руководителĕсем тата организаторĕсем Ворошиловпа Буденный калама çук паллă вырăн йышăннă. Сталин йулташ пуçарнипе йĕркеленĕ Пĕрремĕш Утлă çар Хĕрлĕ Çар Деникина хирĕç паттăрăн тăрса кĕрешнĕ çĕрте чылай паха страницăсем çырса хучĕ.

Деникина çĕмĕрсе аркатас ĕçре Сталин йулташпа пĕрле Серго Орджоникидзепе Сергей Мироныч Кирово активлăн кĕрешнĕ. Хĕрлĕ утлă çар Воронежа килсен, ăна пулăшма чукунçул çинче ĕçлекенсен отрйачĕсем тата Воронежри рабочисем пынă. Вĕсене Лазарь Моисейевич Каганович йертсе пынă.

Деникина çĕмĕрсе аркатнипе Антантăн иккĕмĕш походне—14 государствăн пĕрле тунă похода аркатнă. Пулла тăшмансенĕ пĕтерне. Пер Крымра кăна Врангел тата Деникин çарĕсен йулашкийĕсем сыхланса йулнă.

Çĕршыв кăштах сывлăш çавăрса йаче. Парти, Хĕрлĕ Çара çирĕплетессине пĕр чĕп ĕм те йавышлатмасăр, çак сывлăш çавăрса илмели тапхăрпа халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕçре усă курат. Партин IX-мĕш сйесĕнче Ленин хуçалăх планне туса хатĕрлеме чĕнсе, вăл уйрăманăх партине панла Польшă телĕшпе сыхлăкла пулма астутарат, мĕншĕн тесен Польшăна Совет Российĕ çине тапăнма Франци империалисĕсем хĕтĕртсе тăнă.

Егемлехĕн аслă генийĕ, йаланхи пекех, малтанах калаоа кăтартса пани тĕрĕс пулнă. Сйес пулнă хыççăн пĕр уйăх та иртмен, çапăçусăр вăхăт иртет. 1920 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче панла Польша, хăй хуçисен ирĕкне пурнăçа кĕртсе, Совет Российăне хирĕç вăрçа

тухнине пĕлтерчĕ Çапла пуçланчĕ Антантăн виççĕмĕш похочĕ.

Май уйăхĕнче Польшă панĕсем Кийева йышăнчĕç. Хăйсем йышăнса илнĕ территорире вĕсем реставраци тăвас программăна уççăнах пурнăçа кĕртсе пынă, кивĕ, помешчикла-буржуалă стройа çĕнĕрен туса хунă.

Польшă панĕсем ирĕклĕ Совет Украинипе Белоруççине пăхăнса тăракан çĕршывсем—колонисем туса хума тăрăшнă.

Польшă захватчикĕсем хăйсем йышăннă территорире пурăнакан халăхсене нихăçан курман хайарлăхпа асаплантарнă, рабочисемпе ĕççыннн хресченсене тискерĕн вĕлернĕ.

Парти чĕннипе пĕтĕм çĕршыв хăйĕн тăван çĕршывне панла Польшăран сыхлама çĕкленет.

Ытти фронтсенче ирĕкленнĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсене васкавлăн кăнтăр хĕвеланăç фронтне илсе пынă. Кавказ фронтĕнчен, 1000 километрлă паттăр марш туса, Ворошиловпа Буденный пуç пулса йертсе пыракан Пĕррĕмĕш Утлă çар çитет. Хĕвелтухăçри фронтран Чапайевцăсем пынă.

Пĕрремĕш Утлă çар Польшă çарĕсен тылне кĕрсе, Кийев патĕнче Польшăн 3-мĕш çарне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкат.

Польшă панĕсене аркатма парти каллех Ленинăн шанчăклă соратникне—Сталин йулташа йарат. Сталин, кăнтăр-хĕвеланăç фрончĕн Револьуцилĕ Çар Совечĕн членĕ пулса, шур польаксене аркатас ĕçре мĕнле вырăн йышăнни çинчен Ворошилов йулташ çапла çырат:

„Польшă çарĕсене çĕмĕрсе тăкни, Кийева тата Сынтăм çыранри Украинăна тăшмансенчен тасатни, Галици патнеле тарăнăн шалала кĕни, 1-мĕш утлă çарăн паха рейдне организацилени—çаксем йăлтах Сталин йулташ тунă ĕçсем пулса тăраççĕ. Вĕсем, пуринчен

ытла, вăл пĕлсе, ăслăн йертсе пынин результачĕсем пулса тăраççĕ". (Ворошилов. „Сталин тата Хĕрлĕ Çар", стр. 29).

Хĕрлĕ Çар пирĕн тăван çĕршывăн территорине шур польаксенчен хăвăрттăн тасатрĕ. Ворошиловпа Буденный йертсе пыракан Пĕрремĕш Утлă çар пансене тăстанах хăратса тăнă, вĕсем вăл сывхарнине илтсенех пăраха-пăраха тарнă.

Çав вăхăтра, Хĕрлĕ Çар Польшă панĕсене çĕмĕрсе аркатнă вăхăтра, кăнтăр йенчен Врангел наступлени тума пуçлат.

Парти Врангеле—Антантăн йулашкине çĕмĕрсе тăкма Сталин йулташа хушат.

Перекопшăн пынă çапăçусем ССР Сойузĕнчи граждăн вăрçин пĕтĕм паттăрла историнче чи çутă страницăсем пулса йулаççĕ.

Перекоп патĕнчи çапăçусен руководителĕсемпе бойецĕсем хăйсене ĕмĕр тĕксĕмленми мухтавпа витрĕç. Вăл мухтав ĕççыннисен чĕрисенче ĕмĕрех пурăнĕ. Перекоп паттăрĕсен—Фрунзен, Ворошиловăн, Блюхерăн мухтавлă ĕçĕсене çĕршыв нихăçан та манмĕ. Çав 1920 çулхи нойабĕрĕн 16-мĕшĕнчи паттăр çапăçусене пула Антантăн йулашки ставленникне—барон Врангеле тинĕсе тытса ывăтнă.

Врангеле çĕмĕрсе тăкнипе Хĕрлĕ Çар пирĕн тăван çĕршыв территорине интервентсенчен тĕппипех тасатса çитереймерĕ.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Йапони захватчикĕсем хуçа пулса тăнă. Вĕсем пирĕн тăван çĕршывăн территорийĕ çине 1918 çулхи çуркунне шăванса кĕнĕ пулнă.

Йапони империалисĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи пысăк пуйанлăхсене хăйсен аллине йарса илме пăхнă. Анчах Хĕрлĕ Çар малала çĕнтерÿпен пынине [illegible]

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Виçĕ пăрçĕмĕрен тĕл пулни

„Йермак" борчĕ, февралĕн 21-мĕшĕ. (Радио. ТАСС-ăн йатарласа кайнă корреспонденчĕ).

Февралĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла „Йермак" Гренланди тинĕсĕн пăрĕсем хушшине кĕчĕ. Февралĕн 21-мĕшĕнче 4 сехет те 40 минутра пăрçĕмĕрен „Таймырпа" „Мурман" патне çывхарчĕ. Тĕлпулу çурçĕр широтин 70 градусĕпе 7минутинче, хĕвеланăç долготин 17 градусĕпе 5 минутинче пулса иртрĕ. Мухтавлă тăватă паттăра çирĕппĕн ыталарăмăр.

Папанин, Кренкел, Федоров тата Ширшов, епĕ вĕсене иртнĕ çулхи иййунĕн 6-мĕшĕнче полюс патĕнче хăварнă чухнехи пекех, сывлăхлă та хаваслă. Хăйулă тĕпчевçĕсем „Йермак" çине куçса ларчĕç. Материалсене тата станцин пĕтĕм пурлăхне те унтах куçарнă. Геройлла пăрçĕмĕренсемпе заданине калама çук чаплă пурнăçа кĕртнĕ „Таймыр" тата „Мурман" карапсемпе ăшă кăмăллăн уйăрăлнă хыççăн, „Йермак" кăнтăр йенне, „Мурманец" патнеле çавăрăнчĕ. Унăн задачи—„Мурманеца" пăрсем хушшинчен тухма пулăшасси.

ШМИДТ.

„Мурманец" таса шыв çине тухнă

Ульйанов йулташ радиограмми

„Мурманец" борчĕ, февралĕн 21 мĕш. Гринвич вăхăчĕпе 13 сехетре таса шыв çине тухрăмăр. Çурçĕр широтин 63 градусĕпе 24 минутинче, хĕвеланăç долготин 34 градусĕпе 30 минутинче пыратпăр. Тол кăшпех пĕлĕтлĕ, тĕтрелĕ. Сывлăшри температура 1 градус ăшă. Пурте йĕркелех

Ульйанов. (ТАСС).

ССР Сойузĕн Испанири тусĕсен обшчестви Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 20 çул тултарнă тĕле

ССР Сойузĕн Испанири тусĕсен обшчествин Ĕçтăвакан Комитечĕ ССР Сойузĕн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарна май чĕнсе каланине пичетленĕ. „Совет Сойузĕнчи халăхсем,—тенĕ чĕнсе каланинче,—çав чаплă куна саккунлăн мухтанса хатĕрленеççĕ.

Испанире, фашисăмпа кĕрешнĕ çĕрте, ССР Сойузĕнче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çирĕм çул тултарнине чысласа уйавласси уйрăмах чĕререн хаваслă та паллă пулать. Хĕрлĕ Çара туни, вăл хăй мĕн пурăнма пуçланăранпах тĕрлĕ тăшмансене хирĕç çĕнтерÿлĕн кĕрешсе пыни, унăн хăвачĕ, тимĕр пек çирĕп дисциплинăла тата вăл пĕтĕм халăхлă çар пулса тăни—Испани халăхне калама çук паха пример парать тата ăна тăшмана çĕнтермеле шанчăклăх парать".

(ТАСС).

Хĕрлĕ Çар уйавне плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илчĕç

Деткомиççин Шупашкарти фабрикĕ Сĕнтĕрвăрринчи заводпа социалисăмла ăмăртса ĕçлесе Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине хăйĕн производства планне иртерсе тултарнипе кĕтсе илчĕ. Фабрикă йанварти плана 123 процент, февральти плана февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне 111 процент тултарчĕ.

Фабрикра стахановецсем 26 çын, ударниксем 27 çын шутланаççĕ. Спирин, Смирнов, Тарасов, Феодосейев тата ытти стахановецсем нормăна 150—180 процент тултарса пыраççĕ. Весем уйăхра 500 тенкĕрен пуçласа 700 тенке çити ĕçукçи илеççĕ.

Фабрик коллективĕ 1938 çулти плана Октаберти социалисăмла аслă революци уйавĕ тĕлне тултарма обйазателства илчĕ.

* * *

Деткомиççин Сĕнтĕрвăрринчи завод коллективĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн уйавне производствăра çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ. Завод февралĕн 20 мĕшĕ тĕлне уйăхри плана 100 процент тултарчĕ. Заводри стахановецсем: Копылов, Блинов, Сундырев йулташсем нормăна 180 процент ытла тултарнă. Копыловпа Блинов йулташсем йанварте 1050-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Рабочисем çулталăкри плана Октабĕр уйавĕ тĕлне тултарма пулчĕç.

Зимин.

---

70 çын значоксем илчĕç

** Иуçкассинчи (Елĕк р.) вăтам шкулта вĕренекенсенчен çак февраль уйăхĕнче 70 çын „ПВХО", 36 çын „ГСО" нормисене парса значоксем илчĕç. Февралĕн 23-мĕшĕнче шкулта Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флотăн паттăр ĕçĕсем çинчен доклад туса параççĕ. Драмкружок „Маршал ача чухне" йатлă пйесăна лартса парать. Хор кружокĕ „Песня про Котовского", „Песня о Сталине", „Коминтерн" т. ыт. йурăсене йурласа кăтартать. Шкулти стена хаçачĕ кунсеренех Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ çинчен çутатса пычĕ.

Т. Белов.

Укерчĕк çинче: (сулахайран сылтăмала) К. И. Соболев, И. П. Путилов, Н. Т. Крушилов тата Б. П. Вайсберг курсантсем полкри хĕрлĕ кĕтесре (Мускаври Пролетарилĕ Хĕрлĕ йалавлă Стрелковой дивизин Н-ски полкĕ).

С. Лоскутовпа Б. Фишман фото-ÿкерчĕкĕ. (Сойузфото).

Йурăсемпе кĕтсе илеççĕ

** Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта вĕренекенсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă май, Совет Сойуз маршалĕсен Ворошилов, Буденный, Блюхер, Йегоров йулташсен пурнăçĕсемпе ĕçĕсем çинчен вĕренчĕç. 8-мĕш „В" класра вĕренекенсем уйав йачĕпе йатарласа стена хаçачĕ кăларчĕç. Тата шкулти хор кружокĕпе шавлă оркестр йубилейлă вечĕрта „Конноармейская", „Песня о Ворошилове", „Песня о Сталине", „Комсофлотская песня" тата ытти йурăсене те йурласа пама хатĕрленчĕç.

Ал Максимов.

** ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çумĕнчи пионерсен аслă вожатăйĕсене хатĕрлекен шкулта вĕренекенсем граждăн вăрçин геройĕсен, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн çулпуçĕсен биографийĕсене вĕренеççĕ. Пайанхи куна Буденный, Ворошилов, Блюхер, Чапайев, Фрунзе, Шчорс биографийĕсене вĕренчĕç. Тата халĕ аслă уйава кĕтсе илес майпа 14 студент Ворошиловла тĕл перекенсен значокĕсене илчĕç. Çакăн пекех „ПВХО", „ГТО", „БГТО", „ГСО" значокĕсем илме хатĕрленесси те аван пырать.

Александров.

** Шупашкарти педагогикă училишчинчи Осоавиахим организацийĕ хăйĕн ĕçне çенетсе йĕркелерĕ. Çак кунсенче Осоавиахим членне 25 студент хутшăнчĕç 64 студент „ПВХО" значокĕсем илме нормăсем пачĕç.

Н. Матвейев.

** Чăрăш Туçари (Çĕрпÿ р.) туллимар вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем февралĕн 23 мĕшне пысăк хавалăхпа кĕтсе илчĕç. Шкулти литкружок уйав йачĕпе „Хунав" йатлă илемлĕ литература журналĕ кăларчĕ. Уйав йачĕпе пулакан вечĕрта вĕренекенсем сыхлăх ĕçĕ çинчен çырнă сăвăсене каласа параççĕ.

В. Прокопйев.

** Карачри вĕренÿ пунктинче вĕренекен допризывниксем (Куславкка р.) кашнийех оборонă значокĕсем илчĕç. Акă Чĕнкасси йалĕнчи допризывник Иван Любов вĕренÿ пунктинче „отлично" паллăпа вĕренчĕ. Вăл „ГСО", „ПВХО" тата Ворошиловла тĕл перессипе нормăсене отлично парса, значоксем илчĕ. Любов йулташ пек оборонă значокесене 3—4-шер илекенсем татах та нумай пулчĕç.

Ф. Данилов

ПОЛИТРУК КАНИЧЕВ

Всеволод Каничев Хĕрлĕ Çара 1933 çулта илнĕ. Чикĕри артиллери полкĕнчи икĕ çул хушшинчи службă Каничевшăн сисĕнмесĕр иртнĕ. Каничевăн, пурин пекех Хĕрлĕ Çартан таврăнас вăхăт сывхарса çитнĕ. Анчах мĕнле хăварас-ха хăйне ÿстернĕ полка, батарейăна. Полк командованийĕ Хĕрлĕ Çар службинче срукран ытлашши йулма сĕнсен Каничев пысăк савăнăçпа килĕшнĕ. Çак кунтан Каничев йулташ çар ĕçне хăйĕн ĕмĕрти професçийĕ тăвассине татса парать.

Политруксен курсĕнчен ăнăçлăн вĕренсе тухсан полковой шкулсенчен пĕрне кайма вырăн илет. Хăйне хушнă ĕçе пысăк чыслăхпа пурнăçа кĕртет. Вăл политрук пулса ĕçленĕ ротă çар тата политик вĕренĕвĕ йенĕпе пыракан социалисăмла ăмăртура малти вырăн йышăнать.

Çамрăк, хăйне лайăх палăртнă политрука çĕнĕ ĕç параççĕ. Ăна чăвашсен батарейне ĕçлеме йараççĕ.

—Тÿрех калатăп, кăштах шиклентĕм. Ĕçлессинчен мар епĕ шикленеттĕм, мана пĕр ыйту—чăваш чĕлхине пĕлменни шухăшлаттаратчĕ. Мĕнле ĕçлемеле-ха чĕлхене пĕлмесĕр? Анчах ним те мар, çирĕппĕн ĕçлеме тытăнтăм. Малтанхи кунсенчех пĕтĕмĕшпех ĕçе парăнтăм. Сăнарăм, ĕçлеме йурать çеç мар, лайăх ĕçлеме пулать. Батарейăри йĕкĕтсем веçех пĕр пекпит лайăх халăх, ĕçлеме йуратакан, вĕренме тăрăшакан халăх.

Епĕ хамăн умма батарейăри пур бойецсене те сăнаса вĕренес задачăна лартрăм. Вĕсен пурнăçĕсемпе, вĕсен интересĕсемпе пурăнма тытăнтăм, вĕсене пулăшса пытăм, хамăн воспитанниксем политикпа çар ĕçне вĕренес йенĕпе тунă кашни утăма сăнаса пытăм. Епĕ батарейăра ĕçленĕ чухне хамăн ĕçе çакăн пек турăм: ман пата бойецсем кирек мĕнле вăхăтра та, кирек мĕнле те пулин пĕчĕк йе пысăк ыйтусемпе йулташла çÿремеле.

Акă калăпăр, Долгов красноармейец çинчен. Халиччене асран каймаст вăл. Питех те аван йĕкĕт, анчах калаçма йуратмасчĕ, кичемĕн çÿретчĕ. Вăл пирĕн патра кирлĕ те пысăк специальнăç йышăнса тăнă, наводчик пулнă. Çапах та орудирен пеме начар пĕлетчĕ: йе персе çитерейместь, йе иртерсе йарать. Епĕ ун çине сывăхраххăн пăхрăм. Куратăп: йĕкĕт хăйĕн ĕçне хытă йуратать, анчах ăна çĕнсе илме пултараймаст. Орудирен пенĕ çĕрте пулнă хыççăн ик-виçĕ кун хушши ĕç ăнманни çине çилленсе салхулăн çÿрет. Пĕрехинче епĕр унпа вăл-кун çинчен калаçу пуçарса йатăмăр. Епĕ ăна калатăп: „Акă мĕн Долгов йулташ, епĕр полкра чи лайăх батарейă пулма обйазателства илтĕмĕр. Халĕ округри пÿр батарейăсем те снайперлă батарейă пулассишĕн епĕр пуçарнине çавăрса илчĕç. Пысăк ĕç. Кун пирки есĕ мĕн калатăн?."

Снайпер пулма шутлатăп политрук йулташ,—ответлерĕ Долгов,—анчах манăн математикă каймаст, епĕ нимĕнле те расчетсене кирлĕ таран вĕренсе çитейместĕп.

—Мĕн вара,—тетĕп епĕ,—пĕрле ĕçлеме тытăнар, пĕрле ĕçлесен математикă та малала кайĕ. Йурать-и?

Çакăнтан пуçласа епĕ хамăн пушă вăхăта пĕтĕмпех ăна парса пытăм. Йуратса пулăшса унтан чаплă бойец-наводчик, снайпер çитĕнтертĕм. Епĕ калаçнă кунтан пуçласа Долгов пĕтĕм батарейăна тĕлĕнтермеле çĕкленме пуçларĕ. Ăстан мĕн пачĕç, кичемлĕхе те алпа шăлса пăрахнă пекех сирчĕ. Çын патне уйрăмăн пыни кирлĕ. Кашни бойеца пĕлмеле...

Çуркунне полкра орудисенчен пенĕ чухне пирĕн батарейă пĕрремĕш вырăн йышăнса пĕтĕм полка тĕлĕнтерчĕ. Çакăнтан епĕр пур кăтартусемпе те малти вырăна аларан вĕçертместпĕр.

Манăн чăваш батарейĕнчи ĕç—хамăн пурнăçри ... çути, ... чаплă ... пулса тăрать. Хăвăн таврари ... вăрттăн ÿсни çине ... пите ... насла. Вĕсем пурте Хĕрлĕ ... палесĕнчен килнĕ. Хĕрлĕ Çар... хушши пулма хыççăн вĕсем ... çынсем пулса тухаççĕ, çар ĕç... не тĕплĕн вĕренсе çитеççĕ. Ар... йăвăр ĕç. Унта нумай пĕлни ... хастарлăх, хăйулăх кирлĕ. Çак... сене пĕтĕмпех бойецсен йăли... Халĕ пĕтĕм кăмăлпа çакна ка... епĕр çав пахалăхсене бойец... кĕртрĕмĕр, бойецсене çав ... вĕрентсе ÿстертĕмĕр. Çавăн çи... са парать ĕнтĕ кĕркуннехи та... ренÿре пирĕн батарейă малт... тухни те.

Пĕрре каçхине епĕр хамăр ... çывăхĕнче орудисенчен малтан... са хуна тĕле персе тăратпăр... кĕтмен çĕртен сылтăм фланг... нăн" нумай йышлă конници ... нать, тесе пĕлтерчĕç. Сывăхра... сем пулмарĕç. Приказ памала ... ни минут хаклă вĕт. Хăвăрттă... ле тăнине тишкĕрсе тухатăп... йышăнатăп...

Вĕренÿ хыççăнхи пĕр каç... асра йулчĕ. Концерт иртрĕ. ... рошилов та пулчĕ. Концертра ... рисемпе ташшисем уйрăмăн ... ăнăçлăхпа иртрĕç. Вăл каçхи... нихăçанхинчен те лайăхрах ... селĕмрех ташларĕç. Мĕншĕн ... хамăр вĕренÿре малти вырăн... пĕлетпĕр, туйатпăр. Епĕр ха... гарейă полкра çеç мар, пĕтĕм ... паллă вырăна тухни çинчен ... Епĕр орудисенчен лайăх пет... çине хунă задачăсене ăнăçл... кĕртрĕмĕр. Çапах та хумхана... хуша сывăраймастпăр.

Çунакан кăват тавра пурте ... çемйе пек пуçтарăнса лартăмăр... татах та иртнĕ ĕçсене аса ... кам, çав Долговах иккен ... каймали срукчен шутлă кунсе... ни, вĕсем киле, йала пачах у... пулса кайни, уйăрăлса кайма ... ни, вĕсем йала кайсан сыру ... тытма хатĕрри, политрук й... сене манмасан, колхоза çар ... рейă ÿсĕмĕсем пирки çырсах ... пуласси çинчен систерсе пала...

Епĕ вĕсене тимлĕн итлерĕм... хушшинче телейлĕ, чăн-чăн ... нăçра пур телейлĕхе тулли... тăм. Епĕ хамăн таврала патм... сывлăхлă, телейлĕ çамрăксем... куртăм. Епĕ çав хăйула, хас... çитнĕ, тăшмансемпе нимĕнле ... мен, Ленин—Сталин партийĕ ... лех паранна, йăвăр условисен... сене чаплăлăхпа палăртнă ... хамăн воспитанниксемпе ... ларт тăм...

Епĕ тухатăп, вăл ĕçлеме ... пулĕмĕн кантăкĕ, умĕнче ... вăхăт хушши сутăлса тăра... Акă вăл пуçне Ленин... сем çинеле тайнă, çав ... чаплă ăслăлăх çăлкуç... ничев вĕренÿпе опыт, ... лăх илсе, ăна халăх, ... кайать.

„Красная ...

Испанири фронт...

ХĔВЕЛТУХĂÇРИ (АРАГ...

Испанин оборонă ми... нĕ тăрăх, февралĕн 20... патĕнче пысăк çапăçусе... канцăсем, Мансуетона (... пе хĕвелтухăçнеле) пăлх... тытса тăнăскерсем, хăйс... çине куçнă. Темĕн пек ... сан та пăлхавçăсем вĕс... хăваласа кăларайман. ... республиканцăсем Тури... (Теруелрен кăнтăр йенн... кĕмĕш лини çине куçнă.

ЦЕН...

Гавас агентстви пĕлте... рид çывăхĕнчи фронтра... торĕнче республиканц... 19-мĕшĕнче контрминăна... Çав минă сиксе кайнипе ... пĕсем тата укрепленисен... мĕрĕлнĕ. Кайрантарахпа... динамитчикĕсем çар гос... ларакан çуртсене ишĕлте... вăн хыççăн республикан... çав территорийе пĕтĕмĕш...

Паттăр Хĕрлĕ Çар

(*Йулашки*)

те тытса чарайман. 1922 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Революцилĕ Халăх Çарĕн чаçĕсем, Блюхер йертсе пынипе, Волочайевкăна штурмлаççĕ.

1922 çулхи октаберĕн 25-мĕшĕнче Владивостока тăшмансенчен ирĕке кăларнă.

Йапони интервенцине пĕтерсе хунă, çĕршыва интервентсемпе шургвардейецăсенчен тасатнă.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан Хĕрлĕ Çар граждăн вăрçинчен çĕнтерÿлĕн тухрĕ.

ССР Сойузĕнчи рабочисемпе хресченсем мирлĕ строителствă ĕçне тытăнма шанчăклă условисем илчĕç.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен вăл „Çĕнĕ класăн çĕнĕ çар организацийĕ" (Ленин), ун пекки не ĕтемлĕх историйĕ халиччен курман-ха. Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен ун кĕрешĕвен тĕллевĕсемпе задачисем пĕтĕм совет халăхĕн тĕллевĕсемпе задачисем пулнă.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен унăн организаторĕ тата çулпуçĕ Ленин—Сталин большевикла партийĕ—рабочи класпа, пĕтĕм ĕçхалăхĕпе тачă сыхăнса тăракан парти пулнă.

Ленин—Сталин партин Тĕп Комитечĕн членĕсем Молотов, Калинин, Фрунзе, Ворошилов, Орджоникидзе, Киров, Каганович, Куйбышев, Микойан, Андрейев йулташсем чи ответлă ĕçе татса паракан фронтсенче пулнă.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен пĕтĕм оборонă ĕçĕсен пуçĕнче пĕр улшăнмасăр Ленин тата Сталин тăнă. Хĕрлĕ Çарăн пĕтĕм строителствинче йертсе пырас ĕçсене Ленин тÿрех хăй туса пынă. Ленинăн Кремльри кабинечĕ вăл вăхăтра çĕршыв оборонин чăн-чăн оперативлă штабĕ пулса тăнă. Кабинетра çакса тултарнă карттăсем тăрăх, Ленин фронтсенче ĕçсем мĕнле пынине, чи пысăк та паха операцисем мĕнле сарăлса пынине сăнса тăнă, работниксене фронтран чĕне чĕне илнĕ, фронтсене пулăшма тата çирĕплетме çынсем йарса тăнă.

Ленин Сталинпа пĕрле Хĕрлĕ Çарăн пысăк та паха операцийĕсен планĕсене çирĕплетсе пынă. Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен Ленинпа ретĕн Сталин ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çар строителствинче тата унăн çĕнтерĕвĕсене организацилес ĕçре Сталин калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Совет республикине тăшмансенчен хăтарса хăварнă, татăклă çапăçу операцийĕсене,—Царицына, Перма, Петрограда, сыхлани, Деникина çĕмĕрсе тăкни, шур полякĕсене çĕмĕрсе тăкни, Врангеле пĕтерсе хурас ĕçе хатĕрлени,—çавсене пурне те Сталин йулташ хатĕрлесе чаплăн пурнăçланă.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен вăл тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешÿре пысăк талантлă большевикла çар кадрĕсем, Хĕрлĕ Çарти пролетарилĕ полководецсен кадрĕсем хатĕрлеме пĕлчĕ. Вĕсенчĕн чи чаплисем—Луганскри слесăр, ватă большевик Клим Ворошилов. Ворошилов йулташ граждăн вăрçи пынă çулсенче Луганскри рабочисен пысăк мар отрйад командирĕнчен Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чăн-чăн аслă полковочĕ пулса тăчĕ. Пит те пысăк, калама çук талантлă пролетари полководецĕ пулнă Михаил Васильйевич Фрунзе—вăрттăн ĕçленĕ ватă большевик, Хĕрлĕ ткачсен хулинчи — Иваново — Вознесенскри бойевой дружинăсен организаторĕ. Мухтавлă пролетарилĕ полководецсем пирĕн маршалсем—Буденный, Блюхер йулташсем те çавăн пекех граждăн вăрçин вучахĕнче ÿссе пиçĕхнĕ, çирĕпленнĕ.

Граждăн вăрçи социалисăмлă тăван çĕршыв ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн хăйсен пуçĕсене хунă нумай легендарлă геройсем ÿстерчĕ.

Вĕсен хушшинче питех те палăрса тăраканнисем Василий Чапайев, Николай Шчорс т. ыт. те пулнă.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсене çавăн пекех тата тĕнчери пролетариат пулăшнипе тунă, вăл совет государствине сыхласа империалисла захватчиксене хирĕç активлăн кĕрешнĕ.

Ленин—Сталин йертсе пынипе Хĕрлĕ Çар йутçĕршывсенчен килнĕ захватчиксен, çарĕсемпе вĕсене тара кĕрешнĕ шургвардейецăсене çĕмĕрсе тăкрĕ аслă тăван çĕршывăмăра пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварчĕ, унăн никама та пăхăнса тăрас марлăхне сыхласа хăварчĕ, совет халăхне çĕршыва социалисăмла çĕнетсе улăштарас тĕлĕшпе гигантла пысăк ĕçсем тума кирлĕ пĕтĕм условисене туса пачĕ. Совет Сойузĕнче ĕнтĕ социалисăмла обшчествă туса хунă, експлоататорсен класĕсене тата çынна çын експлоатацилеме пултарас майсене ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хунă. Социалисăмла реконструкцине çĕнтерÿлĕн пурнăçланипе пула Совет Сойузĕ хăватлă индустрилĕ державă пулса тăчĕ, вăл чи малта тăракан, чи çĕнĕ те лайăх техникăпа хĕçпăшалланнă, хăватлă Хĕрлĕ Çар туса хучĕ. Капиталисăмла йĕригавралăха тата интервенци хăрушлăхне йаланах асра тытса, пĕтĕм совет халăхĕ ССР Сойузĕн оборонă тĕрекне çирĕплетес тĕлĕшпе алла хумасăр ĕçлет.

„Капиталисăмлă йĕритавралăх пур чухне вăрçăлă интервенципе реставраци тума хăтланасси пулма пултараймаст, тесе тăмпайсем, йе хăйсем пире курайманнине мухтанчăклăхпа витсе хума тата халăха демобилизацилеме тăрăшакан вăрттăн тăшмансем анчах калама пултараççĕ (Сталин).

Фашисла провокаторсем ССР Сойузне хирĕç вăрçа хатĕрленни çинчен кашни кунах çĕнĕрен çĕнĕ хыпарсем килеççĕ. Капиталисăмлă государствăсем пирĕн пата темĕн чухлĕ шпионсемпе диверсантсем йараççĕ, шпионла ĕçсем тума сутăнчăк йăтăсене, тăван çĕршыва сутакансене—ирсĕр троцкиссенчен, бухаринцăсенчен, буржуалă националиссенчен пухаççĕ. Партипе Совет влаçĕ троцкисла-бухаринла йăтă кĕгевĕнчи пытанса ларнă фашисла шпионсемпе сăтарçăсен, пирĕн çĕршывăн оборонă тĕрекне çĕмĕрме тата пирĕн тăван çĕршыва Германипе Йапони фашисăмĕн пусмăре айне чиксе хума пикеннĕ çелен-калтасен йăвисене аркатса тăкрĕç.

Пытанса ларнă тăшмансене пурне те пĕр хăвармиччен кăкласа пăрахма, капиталисăмла йĕритавралăхăн тата унăн маскăсемпе витĕннĕ агенчĕсен пур тĕрлĕ чейе-ирсĕр ĕçĕсене те тăрă шыв çине кăларма пĕтĕм партин, пĕтĕм халăхăн хатĕр тăрас пулать.

„Нимĕнле ăнсăртлăх та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала",—тет Сталин йулташ, тăшманла капиталисăмла йĕритавралăх йенчен интервенци тата реставраци тума пикенес хăрушлăх чăнах та пуррине тата та тепĕр хут аса илтерсе.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ—лăпкă саманан никам çĕмĕреймм тĕрекĕ. Пирĕн çĕршыв вăрçăшăн мар, йут çĕршывсене туртса илме, вĕсем çине тапăнма тăрăшмаст. Совет правителстви мирлĕ пурнăç ĕçне пĕр пăрканмасăр хÿтелесе, вăрçă чертсе йаракан ирсĕрсен кĕревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пырать. Анчах пирĕн аслă халăх çакна пит лайăх пĕлет: лăпкă самана ĕçне сыхласа тăма пултаракан, пурнăçри чăн-чăн хăватлă вăй вăл—хăватлă Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ флот пулса тăрат, вĕсем интервентсене тăшмансен хăйсен çĕре çинчех аркатса тăкма пултараççĕ.

Совет халăхĕ, алла хумасăр тăрăшса, Совет Сойузĕн оборонă тĕрекне çирĕплетсе пырĕ, социалисăмăн никам çĕнтерейми çарĕн тата мухтавпа витĕннĕ Хĕрлĕ флотăн çапăçури пултарулăхне тата ÿсерех çеклĕ. Тăшмана кĕтсе илме епĕр йалан хатĕр.

П. Орлов.

Ответлă редактор ĕç... И. П. ПАВ...

Академи теа...

Февралĕн 23-м...

Вырăсла спектакль

„ОЧНАЯ СТ...

(4 пайлă, 8 кар...

Аслă режиссе... Г. В. СТРАН... лартать.

Художник Йе. Н. САПОЖНИК...

Талон № 117

„Чăваш коммуни" сырăнса илмелли хаксем: 12 уйăхла—30 т., 6 уйăхла—15 т., 3 уйăхла—7 т. 5 пус, 1 уйăхла—2 т. 50 пус. Адрессене йапала памасть.

Уполномоченный Чувашглавлита № 96. Гор. Чебоксары. Типография ... Чувашполиграфтреста. Заказ № 92. Тираж 15.500 ...